# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

29 (9064) № * Эрнекун, 2023 çулхи июль (утă) уйăхĕн 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Раççейре

## Ĕçлекен пенсионерсен пенси ӳсет

Яланхи пекех, ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕсене августăн 1-мĕшĕнчен çĕнĕрен шутласа палăртаççĕ. Ку вăл индексаци мар, пенси çумне хушса тӳлени. Вăл ĕç паракан ĕçлекен пенсионершăн унчченхи çул социаллă взноссем тӳлесе тăнинчен килет. Ӳсĕм виçи пурин те пĕр пек мар, апла пулин те саккунпа килĕшӳллĕн вăл виçĕ пенси коэффициентĕнчен ытла пулма пултараймасть.

«Ĕçлекен пенсионерсем страхланă пенсие тата ун çумне хушса паракан çирĕплетнĕ тӳлеве планланă индексацисĕр илсе тăраççĕ. Вĕсен пенсийĕсене çуллен августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çĕнĕрен шутласа палăртаççĕ, пенсионерăн унччечхи çул пĕтĕмĕшле ĕç укçи мĕн чухлĕ пулнине шута илеççĕ.

Пенси коэффициенчĕн хакĕ 2023 çулта 123 тенкĕ те 77 пуспа танлашать. Çавăнпа та ĕçлекен пенсионерăн пенсийĕ чи нумаййи 372 тенкĕ те 31 пус ӳсме пултарать», – ăнлантарса панă юрист, арбитраж управляющийĕ Анна Хрусталева.

Аса илтересшĕн, ĕçлекен пенсионерсен пенсине 2016 çултанпа индексацилемеççĕ. Индексацие ĕçлемен пенсионерсем кăна тивĕçеççĕ. Индексацие çуллен ирттереççĕ. Анчах та пенсионер ĕçлеме пăрахать пулсан, ăна пенсие унччечхи сиктерсе хăварнă индексацисене шута илсе тӳлеме тытăнма тивĕç. Апла пулсан пенсие тухнă хыççăн çын мĕн чухлĕ нумайрах ĕçлет, ĕçлеме пăрахсан унăн пенсийĕ çавăн чухлĕ нумайрах ӳсет.

**«Российская газета».**

Республикăра

## Ачасене ĕçе вырнаçтараççĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Олег Николаевăн хушăвне пурнăçласа, республикăра çул çитмен çамрăксем валли «пĕр чӳрече» мелĕпе ĕç тупма тата ĕçе вырнаçтарма пулăшассипе ĕçлеççĕ. Кун пек пĕрремĕш чӳречесем модернизациленĕ кадр центрĕсенче Улатăр, Канаш тата Çĕмĕрле хулисенче ĕçлеме тытăннă.

Эрнесеренхи канашлура ĕç тата социаллă хӳтлĕх министрĕ Алена Елизарова пĕлтернĕ тăрăх, 2023 çулта вĕренӳрен ирĕклĕ вăхăтра вăхăтлăх ĕç вырăнĕпе 14 – 18 çулсенчи 15335-рен кая мар çамрăка тивĕçтерме палăртнă. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçпе тивĕçтерекен органсем вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем йĕркелеме 429 килĕшӳ тунă, вĕсен шайĕнче 9345 çамрăка ĕç тупса панă. Ку вăл çултатăк планĕпе пăхнин 61 процентĕ пулать. Ку шутра йывăр пурнăç условийĕсенчи çамрăксем 35,2 процент.

Тĕп предприятисемпе çыхăнса ĕçлессине йĕркеленĕ. 2023 çулта Чăваш Ен Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерстви Ял хуçалăх министерствипе пĕрле çул çитменнисем валли республикăри ял хуçалăх предприятийĕсенче вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем йĕркелессипе тимленĕ. Çичĕ муниципалитет округĕнчи 16 ĕç паракан кун пек 160 ĕç вырăнĕ пуррине пĕлтернĕ. Ĕçсенчен ытларахăшĕ август – сентябрь уйăхĕсенче тухăç пухса кĕртмелли тапхăрпа çыхăннă.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби.**


**8, 15, 22 АВГУСТА – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**
**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом. 6-10.


Вырма – 2023

## Уйкасянасалсем вырмана тухрĕç



***Муркаш округĕнче вырма сарăлса пырать. Эпĕ çак ĕçпе паллашма çула тухрăм. Июлĕн 27-мĕшĕнче Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри «Палессе» маркăллă комбайн черетлĕ вырмана пуçларĕ. Унпа кăçал Олег Григорьев комбайнер (сулахайри) тата ăна пулăшакан Леонид Макаров (сылтăмри) ĕçлеççĕ. Вырмана Юрпаш ялĕ çывăхĕнчи 50 га кĕрхи тулă уйĕнчен тытăнчĕç.***

***Вырман малтанхи çаврăмĕсем пуçланчĕç кăна, хыççăнах улăма рулон тăвакан трактор та ĕçе пуçăнма хатĕр ларать уйра, паллах, автомашинăсем те унтах. Хуçалăх ертӳçи Федор Егоров (варринчи) каланă тăрăх, кĕрхи тулă пĕтĕмпе 100 ытла га йышăнать, çурхи культура 750 га çинче. Уй-хир çум курăкран таса, тыр-пул çӳллĕшĕ лайăх, пучах та парка. Паллах, тухăç калăпăшĕ пирки калаçма иртерех.***

***– Мĕн акса тунине вăхăтра тĕрĕс-тĕкел пухса кĕртесчĕ, – терĕ вăл вырма ĕçĕ йĕркеллĕ иртессе шанса.***

***Хуçалăх вырмана тухнипе танах кĕр акишĕн те тăрăшать. Ертӳçĕ 200 га шайĕнче кĕрхи культура акса хăварма палăртнине пĕлтерчĕ. Çак вăхăт тĕлне 150 га çĕр хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ.***

***Выльăх апачĕ хатĕрлессипе хуçалăх кăçал уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕ, çителĕклипех хатĕрлерĕ. Мĕн çулнине çийĕнчех пухса кĕртрĕ. Сенаж хатĕрлессипе ĕçсем лайăх пычĕç.***

***Уйкас Янасал чиркĕвĕн настоятелĕ Иоанн атте тата вырăнти территори пайĕн пуçлăхĕ Людмила Михайлова вырмара ăнăçу сунчĕç.***

**Роза ИЛЛАРИОНОВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Кун йĕркинче

## Диспансеризаци тăма ан манăр

### Республикăра 249365 çын сывлăхне тĕрĕсленĕ

Çур çул хушшинче Чăваш Енре диспансеризаци ирттернипе 20 пин ытла çыннăнне вăраха пыракан чирсем пулнине тупса палăртма май килнĕ. Кун пирки эрнесеренхи канашлура Чăваш Ен Правительствин вице-премьерĕ – сывлăх сыхлав министрĕ Владимир Степанов пĕлтернĕ. Вăл палăртнă тăрăх, çынсен диспансеризацийĕ сывлăха сыхлас тата пурнăç тăршшĕне вăрăмлатас енĕпе пĕлтерĕшлĕ майсенчен пĕри пулса тăрать.

2023 çулхи 6 уйăхра профилактика медицина тĕрĕслевне тата диспансеризацин пĕрремĕш тапхăрне 249365 çын тухнă. Вăл шутран пациентсен 39 процентне диагноз çирĕплетме, тарăнрах тишкерӳ тĕпчевĕ ирттерме иккĕмĕш тапхăра хутшăнтарнă. Владимир Степанов каланă тăрăх, çынсен пысăк пайне диспансеризацие явăçтарма май килни ытларах ĕçе вырăна тухса йĕркеленипе – куçса çӳрекен медицина комплексĕсем ĕçленипе çыхăннă. Асăннă комплекссене «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ шайĕнче туянма май килнĕ.

Ултă уйăхра пĕтĕмпе пуçласа вăраха пыракан 20634 чир тĕслĕхне тупса палăртнă. Вăл шутран 43,5 процентĕ ĕçлес ӳсĕмри çынсенне чирĕн малтанхи тапхăрĕнче. Ытларах сарăлнисен шутĕнче – чĕрепе юн тымарĕсен, апат ирĕлтерекен система тата эндокрин чирĕсем.

Сăмахран, диспансеризацие пула 2023 çулхи пĕрремĕш çур çулта чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене пуçласа 8000 ытла тупса палăртма май килнĕ. Палăртса хăвармалла, артери гипертензийĕн 49 процентĕ ĕçлес ӳсĕмри çынсен палăрать. Кунсăр пуçне усал шыçă тĕслĕхне 275 тупса палăртнă, 56,7 процентĕнче – малтанхи тапхăрта.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев палăртнă тăрăх, республикăра пурăнакан çынсен сывлăхне сыхлассин ыйтăвĕсене сывлăха сыхлас тата çирĕплетес, пирус туртнипе тата эрех ĕçнипе кĕрешес енĕпе ведомствăсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлени пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

Канашлу пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Ен Сывлăх сыхлав министерствине 2023 çул валли çирĕплетнĕ планпа килĕшӳллĕн çул çитнĕ çынсен уйрăм ушкăнĕсен диспансеризацине ирттерессипе малашне те тĕллевлĕ ĕçлесе пыма хушнă. Чăваш Республикинчи муниципалитетсен тата хула округĕсен пуçлăхĕсем граждансене çуллен профилактика медицина тĕрĕслевĕ тата диспансеризаци тухмалли пирки пĕлтерсе тăрассине йĕркелеме тивĕç. Вăл шутра – муниципалитетсен территорийĕсенчи пысăк предприятисенче.

Аса илтермелле, Чăваш Республикин Сывлăх сыхлав министерствин ертӳçин пуçарăвĕпе республикăри пур муниципалитета та ĕçре усă курма сывă пурнăç йĕркине тытса пыраси, вилекенсен йышне чакарасси пирки информаци материалĕсем ярса панă. Муниципалитетсенче çакăншăн яваплисене те палăртнă ĕнтĕ. Ведомство асăннă хушăва тимлĕхре тытать.

**Чăваш Республикин Сывлăх сыхлав министерствин пресс-служби.**

Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕҫĕ-хĕлĕ

# Катькас территори пайĕ

## *Анаткас, Катькас, Калайкасси, Карамалькасси, Кораккасси, Кĕрекаҫ, Охтикасси, Ҫеҫмер, Чурикасси, Шатракасси, Шомик, Ярак ялĕсем*



Шомикри Пошкар тата Полевая урамсенче кăҫал шыв пăрăхĕсене пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе йĕркене кĕртеҫҫĕ.



Катькасри Новая урам ҫулне республикăн ҫул-йĕр фончĕ шучĕпе юсама май килнĕ.



Ҫеҫмерте те халĕ ҫĕнĕ шыв башни. Объектри ĕҫсене иртнĕ ҫул пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе туса ирттернĕ.



Ҫурхи кунсем ҫитсен ялсенче экологи субботникĕсем ирттересси йăлана кĕнĕ.

**Геннадий Герасимович ЛЕБЕДЕВ, Катькас территори пайĕн пуҫлăхĕ:**



– Унччен ял тăрăхĕн пуҫлăхĕнче, кăҫалтанпа территори пайĕн пуҫлăхĕнче пĕрремĕш ҫул мар ĕнтĕ ĕҫлетĕп. Вырăнти влаҫ органĕнчи стаж 23 ҫулпа танлашать. Ҫавна май ялсенче пурăнакансен кулленхи ыйтăвĕсем-проблемисем те, пĕрлехи вăйпа хамăр туса ирттерме пултарнă ĕҫсем те – пĕтĕмпех куҫ умĕнче.

Пĕтĕмпех танлаштарура курăнать. Ял ҫыннин пĕтĕмпех йĕркеллĕ ниепле те пулаймасть. Ыйтăвĕсем унччен те пулнă, халĕ те вĕсем ҫителĕклех, малашне те пулаҫҫех. Апла пулин те юлашки ҫулсенче вырăнти самай пĕлтерĕшлĕ ыйтусене, пысăк проблемăсене те татса пама тăрăшатпăр. Хăйсемшĕн ытларах чи малтан хăйсен тăрăшмаллине ҫынсем те ăнланса илчĕҫ, ҫитменнине ял пурнăҫне ҫĕнетсе улăштарассипе республика шайĕнче те хальхи вăхăтра тĕрлĕрен программăсем, проектсем пур. Чи малтан вырăнта пурăнакансем пуҫарулла пулни кирлĕ.

Юлашки ҫулсенче ҫынсене ĕҫмелли шывпа тивĕҫтерессипе, урам хушшинчи ҫулсене юсассипе ҫине тăрса ĕҫлеме тăрăшатпăр. Ку енĕпе вара пуҫарулăх бюджечĕн программин майĕсем пĕчĕк мар. Ҫитменнине ҫапла майпа пурнăҫа кĕртекен пуҫарулăх проекчĕсем ҫине республика енчен уйăракан тимлĕх те пысăк, пулăшăвĕ те витĕмлĕ.

Акă 2021 ҫулта ҫапла майпа эпир хамăр патра Шомикри Ториково урамĕнче ҫул юсама, Пошкар урамĕнче ача-пăча вăйă площадки йĕркелеме, Шатракасси масарĕ ҫинче ҫурт тума вăй ҫитертĕмĕр пулсан, пĕлтĕр Анаткасри Заовражная урам ҫулне юсама, Ҫеҫмерте шыв усрамалли ҫĕнĕ башня туса лартма пултартăмăр.

Кăҫал вара пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпех Шомик ялĕнче пурăнакансемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан шыв ыйтăвне татса парас терĕмĕр. Асăннă ялти Пошкар тата Полевая урамсенче пурăнакансем шывсăр тертленни пĕрремĕш ҫул мар. Паллă ĕнтĕ, 3 километр та 400 м тăршшĕ чавса шыв пăрăхĕсем хурасси, кашни киле шыв кĕртесси хальхи вăхăтра пĕчĕк расхутлă ĕҫ мар. Сметăпа ĕҫсене 8 млн ытла тенкĕлĕх палăртнăччĕ. Ял ҫыннисен хăйсен 847 пин тенкĕ пухма тиврĕ. Кашни кил хуҫалăхĕн 15-шер пин тенкĕ хывма лекрĕ. Апла пулин те ҫынсем кĕтсе пурăннипе нимĕн те пулманнине ăнланса тĕрĕс йышăну турĕҫ. Республика бюджетĕнчен 4 млн ытла тенкĕ, округ бюджетĕнчен 2 млн ытла тенкĕ уйăрнă. Ҫак вăхăта кунта ĕҫсем вĕҫленсе пыраҫҫĕ ĕнтĕ. Подрядчик – «АльянсГрупп» ООО тĕлĕшпе нимĕнле асăрхаттару та ҫук, ĕҫсене вăхăтра, пахалăхлă туса ирттереҫҫĕ.

Сăмах май, республика конкурсĕн кăҫалхи иккĕмĕш тапхăрне хутшăннă проект та пулчĕ. Ҫапла вара кăҫалах Шомик ялĕнче скважинăпа шыв башнине тĕпрен юсама май пулĕ тетпĕр. Ҫитес ҫул вара Шомик ялĕнчех ытти урамсенче те шыв пăрăхĕсене улăштарассипе малалла ĕҫлеме палăртатпăр.

Вырăнти ыйтусене татса парассипе республика пулăшăвĕпе усă курнипе пĕрлех хамăр майсем пирки те манмастпăр. Иртнĕ ҫулсенче ку енĕпе вырăнти бюджетран та укҫатенкĕ май килнипе уйăрнă, ял ҫыннисем хăйсем те тăрăшнă, кунпа пĕрлех спонсорсен пулăшăвĕ те курăмлă. Кун пек спонсорсенчен вара чи малтанах «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикине, унăн ертӳҫине Владимир Малова асăнса тав сăмахĕ каланă пулăттăм. Тĕрĕссипе вырăнти пĕлтерĕшлĕ пĕр ыйтăва татса парассинчен те предприяти айккинче тăрса юлмасть.

Ҫапла майпах 2021 ҫулта Катькасра артезиан скважинине тĕпрен юсаса ҫĕнетме вăй ҫитертĕмĕр. Акă тата иртнĕ ҫул вырăнти бюджетран укҫа уйăрнипе, фабрика пулăшнипе тата ял ҫыннисем хăйсен укҫа пуҫтарнипе Кораккассинче ҫĕнĕ шыв башни туянса хунăччĕ. Кăҫал ăна чиперех вырнаҫтарса лартрăмăр. Башньăна ĕҫлеттерме пусăнассипе, пăрăхсене сыпăнтарса йĕркене кĕртессипе Сергей Шадрин предприниматель строителĕсем аван тăрăшрĕҫ.

Ял ҫыннисем хăйсем те чылай тимлерĕҫ. Уйрăмах вара Владимир Храмов старостăна тата ялти ытти активистсене – Анатолий Харитонова, Владимир Яшкова, Сергей Пушкина ырă енчен палăртса хăварнă пулăттăм.

Сăмах май, кун пек пуҫарулла та хастар активистсем пирĕн тăрăхри кашни ялтах сахал мар. Унччен депутатсен Катькас ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ пулнă ҫынсемпе ҫыхăнăва ҫухатма шутламастпăр. Вĕсенчен чылайăшĕ ҫак вăхăта ял старостин тивĕҫне чунпа пурнăҫлама тăрăшать. Михаил Бурмисов, Димитрий Гусев, Николай Юлин, Владимир Ильин, Олег Петров – чи активлă старостăпа активист шутĕнче.

Пĕтĕмпех пĕр ҫыхăнура. Ялти социаллă, культура сферисем те малаллах аталанаҫҫĕ. Ҫынсене пуҫламăш медицина пулăшăвĕпе тивĕҫтерессипе лайăхланать. Пĕлтĕр Калайкассинче «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕн «Развитие системы оказания первичной медико-санитарной помощи» регион проекчĕ шайĕнче ҫĕнĕ ФАП хута кайрĕ. Кăҫал вара Кораккасси ФАП-ĕнче капиталлă юсав ĕҫĕсем туса ирттернĕ. Ҫавăнпа та пирĕн тăрăхра пурнăҫ пĕр вырăнта тăмасть, малаллах аталанать тесе ҫирĕплетсех калама пулать.

**Владимир Николаевич МАЛОВ, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳҫи, депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕ:**



– Ырă туни ырăпах таврăнать. Ҫак чăнлăха яланах асра тытатпăр. Ыр кăмăллăх акцийĕсене, пулăшу ĕҫне-хĕлне хутшăнасси пирĕн патра яланхи ырă йăлара. Ку енĕпе Катькас территори пайĕпе яланах пĕрле ҫыхăнса ĕҫлесе пыратпăр. Ял ҫыннисен пурнăҫ хăтлăхĕн ыйтăвĕсене пĕрле татса пама тăрăшатпăр. Ытларах чухне ку ыйтусем – ялсенчи ҫулсене юсассипе, ҫынсен шыв ыйтăвне татса парассипе, урамсенчи ҫутă хунарĕсене йĕркене кĕртессипе, ытти хăтлăх ĕҫĕсем туса ирттерессипе ҫыхăннисем.

Май килнипе 2022 ҫулта та вырăнти ыйтусене татса пама тĕрлĕрен пулăшу мелĕпе 1 млн та 740 пин тенкĕлĕх тивĕҫтертĕмĕр. Кораккасси ялĕ валли шыв усрамалли башня туянма округăн Катькас территори пайне 150 пин тенкĕ уйăрса патăмăр.

Иртнĕ ҫул Шомикри тата Шатракассинчи тĕп шкулсене ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне хатĕрлесе ҫитерме спонсорла пулăшупа тивĕҫтернĕччĕ. 100 ача валли шкул хатĕрĕсем туянса патăмăр. Ҫавăн пекех строительство материалĕсем, столовăй валли чашăк-тирĕк тата ытти хатĕр туянса парса пулăшрăмăр.

2022 ҫултах Катькас, Шомик, Шатракасси, Кораккасси, Чурикасси ялĕсен урамĕсенче вырнаҫтарма ҫутă диочĕн хунарĕсене 52 штук туянса панă. Ял ҫыннисем питĕ кăмăллă, тав сăмахĕ калаҫҫĕ. Катькасри ача садĕнче вара предприяти шучĕпе ҫĕнĕ чӳречесем вырнаҫтарса патăмăр.

Иртнĕ кĕркунне Шатракасси садне тĕпрен тасатса хăт кĕртнĕ. Тĕрлĕ хăрăк-марăка пуҫтарса тухнă. Кăҫалтан кунти сад хăйĕн сăн-сăпатне тĕпрен улăштарчĕ. Вăл хăйĕн тухăҫĕпе савăнтарать кăна мар, ҫавăн пекех ял ҫыннисене те кунта халĕ уҫăлса ҫӳреме илĕртӳллĕ.

Шатракасси клубĕн крыльцине юсаса патăмăр. Катькас территори пайне ял кунĕсене йĕркелесе ирттерме вĕҫĕмех пулăшма тăрăшатпăр. Ҫынсен тухăҫлă ĕҫлеме кăна мар, ҫавăн пекех культурăллă та хаваслă канма та майсем пулмалла тесе шутлатпăр.

Учитель кунне пурте пĕрле савăнăҫлăн уявланăччĕ. Ҫавна май Катькас территори пайĕнчи вĕренекенсем валли уяв йĕркелесе патăмăр. Вăл кăмăллă та хаваслă пулчĕ.

Территорири ачасем – пысăк тимлĕхре. Вĕсем валли пысăк уяв мероприятийĕсем Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кунра июнĕн 1-мĕшĕнче те, Ҫĕнĕ ҫул умĕн те ҫуллен йĕркелеме тăрăшатпăр. Ҫĕнĕ ҫул уявне ачасем валли аниматорсемпе йĕркелетпĕр. Ҫакă ырă йăлана кĕрсе пырать ĕнтĕ. Шкул ачисем, ача садне ҫӳрекенсем валли предприятире экскурсисем тăтăшах йĕркелетпĕр. Пĕлетпĕр, вĕсем – пирĕн малашлăх, пирĕн пуласлăх.

Хальхи вăхăтра Украина территорийĕнче ятарлă ҫар операцийĕ пырать. Пирĕн ентешсем те унта хутшăнаҫҫĕ. Мобилизаци йĕркипе унта хутшăнакансене пулăшассинчен чăх-чĕп фабрики те айккинче юлмасть. Хамăрăн салтаксене пулăшмалли «Пĕрле» фонда 200 пин тенкĕ куҫарса парса пулăшрăмăр.

Пĕтĕмĕшле вара юлашки икĕ ҫул хушшинче пирĕн предприяти тивĕҫтернĕ спонсорла пулăшу виҫи 12 млн та 700 пин тенкĕпе танлашрĕ. Вырăссен лайăх каларăш пур: «Да не оскудеет рука дающего». Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Пулăшни вăл – ырă туни. Ырă туни вара ырăпах таврăнать. Ҫакă пĕтĕмпех хамăр ҫынсен пурнăҫне хăтлăрах, меллĕрех тăвассипе ҫыхăннă.

**Кăларăма Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Раççейре

# Ачана ĕç пăсмасть

***Шкулта ачасене ĕçе юратма хăнăхтарасси воспитани процесĕн пĕр пайĕ пулса тăрĕ. Çакăн пек саккуна РФ Патшалăх Канашĕн Думи тӳрех иккĕмĕшпе виççĕмĕш вулавсенче йышăннă. Депутатсем саккун проектне тишкерĕ вăхăтра хăш-пĕр хушăмсем тунă. Вăл шутра – шкулта вĕренекенсене кĕмĕл медальпе чыслассине те, ОБЖ предмечĕн ятне тата содержанине улăштарассине те, çавăн пекех шкул ачисене професси пĕлĕвне парассине те.***

Шкул ачисен çĕнĕ тивĕçĕсем сентябрĕн 1-мĕшĕнченех вăя кĕме пултарĕç. Ачасене ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕсĕр ĕçлеме явăçтарма юрамасть тенине саккунран кăларса пăрахнă. Йышăннă саккун халĕ шкул ачисене обществăлла усăллă ĕçе явăçтарма хистет. Вăл шутра – шкулти тата шкул çумĕнчи территорие таса та тирпейлĕ тытса тăрассине те.

Патшалăх Думин çутĕç комитечĕн председателĕ Ольга Казакова палăртнă тăрăх, ачасем тĕрлĕ мероприятие хутшăнĕç, сăмахран, шкул территорийĕнче йывăç, чечек лартма, библиотекăсемпе музейсенче пулăшма.

«Паянхи улшăнусене тишкермелли тĕп ен шкулсенче ĕç воспитанийĕн пĕтĕмĕшле системине çирĕплетесси пулса тăрать. Улшăнусем класс пӳлĕмĕн, столовăйри, спортзалти тата шкул территорийĕнчи тасалăха тытса тăрассипе, экологи тата патриотла мероприятисене хутшăнассипе çыхăннă», – палăртнă депутат.

Ольга Казакова сăмах Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисене шефа илесси, аслă ăру çыннисене пулăшу парасси тата палăксем патĕнче тирпей-илем тытса тăрасси пирки пынине хушса каланă.

Депутат сăмахĕ тăрăх, шкулти тасалăхпа йĕркелĕхе тытса тăрассипе çыхăннă самантсем ĕçе пурнăçлас килнипе е килменнипе çыхăнса тăмалла мар. «Ку вăл вĕренӳпе воспитанин пĕрлехи элеменчĕ пулса тăрать. Паллах, ачан çул ӳсĕмĕпе сывлăхне шута илеççĕ», – ăнлантарса панă комитет председателĕ.

Çакăн пек саккун кирли çинчен Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчи пур ашшĕ-амăшĕпе педагог та калать. Асăннă комитет председателĕн çумĕ Яна Лантратова çакна палăртнă: «Эпир ӳснĕ, вĕреннĕ вăхăтра доска шăласси, чечек шăварасси, шкул территорине тирпейлесси яланах йĕркеллĕ пулăм шутланнă». Çапла ача хăй ĕçленине кăна мар, тепĕр çыннăн ĕçне те хисеплеме вĕренет.

Иккĕмĕш вулавра депутатсем хăш-пĕр тӳрлетӳсене ырланă. Вăл шутра – «Основы безопасности жизнедеятельности» (ОБЖ) предмет ятне «Основы безопасности защиты Родины» тесе улăштармаллине те. Çĕнĕ предметра ОБЖ пайĕ юлать, анчах та предмет тытăмне пуçламăш çар хатĕрлев элеменчĕсем хушаççĕ – ачасене çар службине çинчен каласа пароççĕ.

Кунсăр пуçне шкулта 11 классене кĕмĕл медаль парассине те каялла тавăраççĕ. Çакна валли выпускникăн аттестатра «4» паллă иккĕрен ытла пулмалла мар.

Иккĕмĕш вулаври тӳрлетӳсемпе çавăн пекех Çутĕç министерстви çине шкул ачисене тĕрлĕ профессипе тĕплĕнрех паллаштармалли методика ĕçне хатĕрлеме полномочи хураççĕ.

РФ Патшалăх Думин председателĕ Вячеслав Володин унчченех ачасене ĕçе юратма шкултанах вĕрентмелле, вĕсем йĕркеллĕ граждансем, пур енлĕ шайлашуллă аталаннă çынсем пулни пĕлтерĕшлĕ, потребительсем пулса ан ӳсчĕр тесе палăртатчĕ.

Спикер çавăн пекех хăйĕн телеграм-каналĕнче ыйтăм иртнерĕ. Унта ачасене хăйсен шкулĕнче обществăлла усăллă ĕçе явăçтармалла тесе ыйтăма хутшăннисен 88 проценчĕ «килĕшетĕп» тесе хуравланă, пусăрăва ырланă.

**РФ Патшалăх Думин депутачĕ Татьяна Дьяконова:**

«Эпир «Вĕренӳ çинчен» саккунра ачасене ĕçе явăçтармаллине çирĕплетсе хăварасшăн. Сăмах ачасен çул ӳсĕмĕпе вăйне кура явăçтармалли ĕçсем çинчен пырать.

Кĕмĕл медаль парасси пирки калас пулсан, çак медале каялла тавăрни кирлех. Нумай чух çапла пулса тухать: ача питĕ тăрăшса вĕренет, анчах та пĕр-икĕ предметпа çав-çавах «4» паллă тухать. Çакăн пек тăрăшуллă ачасене хавхалантармаллах тесе шутлатпăр. Çак медале пама тытăнни те ачасене, пĕтĕмĕшле илсен, ытларах хавхалантарĕ».

**РФ Патшалăх Думин депутачĕ Никита Чаплин:**

«Хальхи вăхăтри саккунпа килĕшӳллĕн, шкул ачисене ĕçе явăçтарма ирĕк çук. Ыйту: вĕсене ĕçе явăçтарма юрамасть пулсан шкул ачисене обществăлла усăллă ĕçе мĕнле вĕрентсе пымалла-ха?

Нумайăшĕ астăвать пулĕ класра дежурнăй пулнине. Çакă та ачасене ответлăрах, ĕçченрех ӳсме пулăшать, тасалăха тимлĕх ытларах уйăрма вĕрентет.

Кунпа пĕрлех саккун шкулсем ыр кăмăллăх ĕçĕсене туса иртерме пулăшассине те çирĕплетсе хăварать.

Паллах, ĕç воспитанине пурнăça кĕртме ачасен çул ӳсĕмне кура хатĕрленĕ программа пулмалла».

**РФ Патшалăх Думин депутачĕ Сергей Алтухов:**

«Çын обществăлла территорие тирпейлĕ тытса тăрасси вăл хăй çав ĕçе хутшăннинчен килет. Çавăнпа та ачасене класс пӳлĕмĕсенче тирпей-илем тума, çулсене юртан тасатма, ытти вак-тĕвек ĕçсене тума явăçтарни обществăшăн пурнăçланă ĕç хаклăхне ăнланма та май парать».

**«Российская газета».**



Вĕренӳ организацийĕсенче

# Шкулсенче çулла та шавлă

Çуллахи вăхăтра шкулсемпе ача сачĕсем ача-пăча сассинчен хăтăлаççĕ те урăх шăв-шавпа тулаççĕ. Уйрăмах Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕнчи пек пысăк калăпăшлă юсав ĕçĕсем пыраççĕ пулсан **(сăн ӳкерчĕксенче)**.

Хальхи вăхăтра унта шкул территорине тирпей-илемпе хăт кĕртессипе тимлеççĕ. Ĕçе пурнăçлама Чăваш Республикин бюджетĕнчен 20 млн та 509 пин ытла тенкĕ уйăрнă, Муркаш муниципалитет округĕн бюджетĕнчен – 1 млн та 543 пин ытла тенкĕ.

Муниципалитет округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, шкул территорийĕнчи ĕçсене «Чебрегионстрой» пĕрлешӳ графикран юлмасăрах пурнăçласа пырать. Объектра кунсерен тĕрлĕ транспорт хатĕрĕ, 20 яхăн рабочи ĕçлет.

Ĕçе вăхăтра туса пынине «Партнер» пĕрлешӳ специалисчĕсем тата А. Петров уйрăм предприниматель контрольлесе тăрассине йĕркеленĕ.

«Пирĕн шкул умĕнчи лаптăка юсаса асфальт сарас ĕç пулса пырать. Шкул территоринче футбол площадки, унтах чупмалли çул та тумалла. Волейбол тата баскетбол вăййисем валли уйрăм площадка тăвассине пăхса хунă. Пирĕн кунта ГТО нормативĕсене пурнăçлама хатĕрленмелли ятарлă лаптăк та пулĕ», – пĕлтерчĕ Мăн Сĕнтĕр шкул директорĕ Людмила Ванюшкина. Вăл каланă тăрăх, строительсем тимлесех ĕçлеççĕ, ку вăхăтра графикран маларах пыраççĕ.

Ытти шкулсенче тата ача сачĕсенче вак-тĕвек юсав ĕçĕсене пурнăçлама Муркаш муниципалитет округ бюджетĕнчен 7 млн та 608 пин ытла тенкĕ уйăрнă. Хальхи вăхăтра юсав ĕçĕ чылай вĕренӳ организацийĕнче пырать.

Çапла Юнкă вăтам шкул çурчĕн çивиттине юсаса çĕнетме 392 пин ытла тенкĕ уйăрнă. Шкул столовăйĕпе кабинет юсаса çĕнетме 952 пин тенкĕ пăхса хунă.

«Путене» ача садĕнче, картишĕнче, ачасем валли сулхăн вырăнсем йĕркелеме 1 млн та 842 пин ытла тенкĕ уйăрнă.

Шурчари тĕп шкул столовăйĕнче юсав ĕçĕсем валли 350 пин тенкĕ, Ильинка вăтам шкул столовăйĕнче юсав ĕçĕсем пунăçлама 728 пин ытла тенкĕ уйăрнă.

Сыпай тĕп шкулĕнче класс пӳлĕмĕсенче вак-тĕвек юсав ĕçĕсем туса ирттерме 250 пин тенкĕ уйăрнă.

«Солнышко» ача сачĕн территорийĕнчи асфальт çулсене çĕнетеççĕ. Çакна валли 2 млн та 300 пин тенкĕ уйăрнă.

Муркаш вăтам шкулĕн Кашмашри тĕп шкулĕнче хушма юсав ĕçĕсем туса ирттереççĕ: ташă залне йĕркелесе çитерме 116 пин тенкĕ ытларах уйăрнă. Кашмашрах шкулти лаборатори кабинечĕсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтереççĕ. Уйăрнă укçа сумми 600 пин тенкĕпе танлашать.

Муркашри Çамрăк техниксен станцийĕнче кăçал чӳречесем улăштараççĕ, 143 пин ытла тенкĕ уйăрнă.

«Василек» ача садĕнче урай улăштарма 185 пин ытла тенкĕ пăхса хунă.

Шатракасси тĕп шкулĕнче те чӳречесем улăштараççĕ – 159 пин тенкĕлĕх.

Оринин вăтам шкулĕнче стловăйри вак-тĕвек юсав ĕçĕсене пурнăçлама тата чӳречесем улăштарма 283 пин тенкĕ пăхса хунă.

Хальхи вăхăтра «Мечта» ача садĕнче крыльца юсаса çĕнетнĕ (571 пин ытла тенкĕлĕх). «Березка» ача садĕнче картишĕнче ачасем валли сулхăн вырăн йĕркеленĕ (150 пин тенкĕ). Чуманкасси вăтам шкул территорийĕ тавра карта тытма стройматериал туяннă.

Кунсăр пуçне кăçал вĕренӳ пайĕ шкулсем валли чашăк-тирĕк 484 пин ытла тенкĕлĕх туяннă.

Ĕçсем малалла пыраççĕ. Вĕсене вĕçленине тĕрĕслеме ятарлă комисси августăн малтанхи вунă кунĕнче вĕренӳ организацийĕсене тухма палăртать.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**





Ятарлă çар операцийĕ

# «Пулеметăн калибрĕ пĕчĕкрех-ха...»

– Эпĕ хам Муркашра пурăнмастăп-ха та, манăн анне Муркашран, – çапла пуçларĕ калаçăва мобилизаципе ятарлă çар операцине кайнă Дмитрий Кудряшов.

Çынсен пĕр пайне мобилизацие явăçтарасси çинчен пĕлтернĕ вăхăтра Дмитрий Муром хулинче пулнă, унта ĕçленĕ.

– Эп тӳрех мана повестка парасçĕ-ши тесе кĕтме тытăнтăм. Алла повестка илнĕ хыççăн хăшĕсем пĕрремĕш партипе унта тухса кайрĕç ĕнтĕ. Мана çаплах повестка памарĕç-ха. Мĕншĕн мана повестка памарĕç? Çак ыйту пуçран тухмарĕ. Эпĕ кăшт пăшăрханма та тытăнтăм. Анне калать, тупнă кулянмалли тет, – аса илчĕ вăл.

Паллах, амăшне те йăланнă вăл, анчах та пĕри ан кай, тепри ан кай, мĕнле пулать-ха вара тесе шутланă. Кайран Дмитрий патне шăпах шăнкăравлаççĕ те ялта повестка кĕтни çинчен пĕлтереççĕ.

– Эпĕ часрах ĕçре ертӳçĕ патне кайрăм та ман пата повестка килнине пĕлтертĕм. Каймалла ман, терĕм те, питĕ хăвăрт тухса килтĕм, – тет салтак.

Çапла ятарлă çар операцине часрах çитес тенĕскер ял тăрăхĕн администрацине те кайман, тӳрех çар комиссариатне вĕçтернĕ. Ăна тӳрех алла повестка панă, «до особого распоряжения» тесе çырнине.

Çакăн хыççăн çар комиссариатне чĕниччен унăн пĕр-икĕ эрне кĕтме тивнĕ. Манса кайрĕç ĕнтĕ, аса илтермелле пулĕ тесе те шутлама тытăннă каччă. Каллех вăхăтра шăнкăравлаççĕ: «Кирлĕ япаласене пуçтар та çар комиссариатне кил, ыран Ульяновска тухса каймалла», – теççĕ.

– Япалисене унччен хаваспах туянса хатĕрленĕччĕ ĕнтĕ эпĕ, мĕншĕн тесен каяс кăмăл питĕ пысăк пулнă. Манăн пичче Саша пулăшрĕ. Пĕтĕмпех хамăр туянма тăрăшнă, мĕншĕн тесен Ульяновска çитсен кирлĕ япаласемпе тивĕçтерессĕх, анчах пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулмасан та пултарать тесе шутланă эпĕ, – тет пурнăçра кăшт маларах пăхаканскер.

Дмитрий хăй вăхăтĕнче призывпа хĕсметре тăнă. Çавăнта танк çине ларнăскер паян кунччен те çак техникăна питĕ кăмăлланине калать. Хĕсметре чухне çур çул танк вĕренӳ центрĕнче Читара пулнă хыççăн тепĕр çур çул Таджикистанра вырнаçнă 201-мĕш çар базинче пулнă.

– Кайран демобилизаци пулчĕ. Киле таврăнтăм та, мĕн ĕçлес? Танксене питĕ килĕштереттĕм, çавăнпа та документсем пуçтартăм та – контрактпа службăна. Мурманска вичĕ çуллăх, хам юратнă танксем патнех, – савăнăçпа аса илчĕ вăл.

Хальхи мобилизаципе те танк часнех лекетĕп тесе шутланă та, анчах урăххарах пулса тухнă.

Мана пĕтĕмпех килĕшет. Малтанах пире пехотăна ячĕç. Темиçе кунтан инструкторсем килчĕç те разведкăна каяс кăмăллисем пур-и тесе ыйтрĕç. Эп – тӳрех хаваспах. Танк çине ларасси пулмарĕ, разведка каяс хуть тесе шутларăм. Ку йышăнушăн ӳкĕнместĕп. Çар операцийĕ пынă вăхăтра разведчиксем патне çитсенех тӳрех ĕçе кӳлĕнтĕмĕр, тылра ларман. Кирлĕ чухлĕ мала кайса хамăрăн цельсене тупса тӳрех вĕсем тăрăх ĕçлеме тытăннă. Хăвна йĕркеллĕ, лару-тăрăва кура тытни пĕтерĕшлĕ. Задачăна пурнăçлама кайиччен çак вырăнта хăвăнтан мĕн килнине пĕтĕмпех тумаллине питĕ лайăх ăнланатăп. Манăн кашни утăм мĕнле те пулин усă кӳмелле. Маншăн малта пулни тылра пулниннен лайăхрах. Малта пулсан пĕтĕмпех ăнланса, курса тăратăн, хыçалта пулнипе çакна нимĕн те пĕлместĕн, курмастăн, ăнлансас та пĕтерейместĕн, – тет çирĕппĕн разведчик.

Дмитрий каланă тăрăх, гуманитари пулăшăвĕ вĕсем патне те час-часах килсе тăнă. Тĕрлĕ регионтан. Паллах, вĕсем ăна тыла тухса илнĕ.

– Оборона министерстви пире, салтаксене, çар чаçĕнче мĕнпе тивĕçтермелле пулнă, пĕтĕмпех панă. Хамăрăн ĕçе меллĕрех, усăмлăрах тума эпир хăш-пĕр япаласене ыйтса илнĕ. Хăшĕсемпе пире тивĕçтерме май тупнă, хăшĕсене вара хамăр туяннă. Çак япаласем, техникăлла хатĕрсем, шанчăклă ĕçлеме пулăшаççĕ. Эпир, разведчиксем, ыттисене те хăрушсăрлăхпа тивĕçтеретпĕр, çавăнпа та кирлĕ хатĕр пурри пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ разведкăра пулеметчик должноçĕнче, тĕп сыпăксенчен пĕри темелле. Пĕр пулеметчик тăшмана пысăк секторта тытса тăрайрать. Çав вăхăтра вара пирĕннисем хăйсен задачине те пурнăçлайраççĕ, – каласа панă май, Дмитрий шухăшĕпе çар операцийĕ пынă вырăнах çитрĕ.

– Пулеметăн калибрĕ пĕчĕкрех-ха... Контрактпа службăра тăнă чухне механик-водитель, оператор-наводчик, танк экипажĕн командирĕ пулнă эпĕ. Кунта танк пулмарĕ... Трофей тытса илсен кăна, – шӳтлесе илчĕ салтак.

Хăйсен команди питĕ туслине, пĕр-пĕрне хăнăхса, пĕлсе çитнине палăртрĕ Дмитрий. Камăн мĕн тата мĕнле ĕçлемеллине те лайăх пĕлеççĕ вĕсем. Тем пулас пулсан кашниех хăйне тĕрĕс тытма пултарнине, çухалса кайманнине те палăртрĕ разведчик. Çакна, ахăртнех, çапăçу хирĕнче тĕрĕслеме тӳр килнĕ, анчах ку сăмаха вăл малалла тăсмарĕ.

– Ульяновскра эпир пĕр уйăх çурă вĕреннĕ. Инструкторсем питĕ йĕркеллĕскерсемччĕ, пире мĕн кирлине пĕтĕмпех вĕрентнĕ: вăрманта, уçă вырăнта ĕçлеме, блиндажсем тума вĕреннĕ, тĕрĕс пытанма та... Вăхăт пирĕн çителĕклĕ пулнă. Эпир тăрăшсах вĕреннĕ – ăста каяссине пĕлетĕн-çке, – аса илчĕ Дмитрий.

Дмитрийпе Муркашра унăн иккĕмĕш отпускĕ вăхăтĕнче тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Отпуска вара халех килмелле пулман иккен. Контузи хыççăн ăна госпитальте сипленĕ, кăшт канма икĕ эрнелĕх отпуск панă.

– Госпитальтен хăçан тухас тесе анчах выртрăм. Мана кунтан кăларăр-ха хăвăртрах тесе ывăнтартăм унта. Яла килсен те кичем пулнине туйса илтĕм. Халĕ кăшт ĕçсем пур-ха – илсе кайма техникăлла хатĕрсем хатĕрлетĕп, ытти ĕçсем те пур. Часрах каялла таврăнмалла – манпа çума-çумăн çапăçакансем унта чухне кунта ларăймастăп эпĕ, – терĕ Дмитрий.

Калаçу пуçламăшĕнчех Дмитрий çар ĕçне парăннă çын пулни палăрчĕ: лери пирки калаçнă чух куçĕ ялкăшать, шухăшĕ те çавăнтах унăн.

– Мобилизаци пирки пĕлтермен, повестка паман пулсан вара? – ыйтрăм хайхи.

Кăшт кăна кулчĕ те:

– Эпĕ документсем пуçтарма тытăннăччĕ ĕнтĕ. Пурпĕр хам ирĕкпе контракт çырса çав нацистсене пĕтерме, пирĕн халăха хӳтĕлеме кайттăмччĕ, – татăклăн хуравларĕ разведчик.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Раççейре

# Тӳлев системи улшăнать

Раççейре пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемелли система улшăнать. РФ Строительство министерстви ятарлă счетсем туса хатĕрлеме пуçланă. Коммуналлă услугăсемшĕн тӳленĕ укçа-тенкĕ çавăнта пухăнса пыма тытăнĕ.

Асăннă пуçару коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемелли хальхи системăна тĕпрен улăштарма тивĕç. Ертсе пыракан компанисем малашне çурт-йĕрте пурăнакансен укçи-тенкипе хăйсем пĕлнĕ пек усă курма пултараймĕç.

Раççей Патшалăх Думин председателĕн строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пĕрремĕш çумĕ Владимир Кошелев ăнлантарса панă тăрăх, хальхи вăхăтра укçа-тенкĕ ертсе пыракан компани счечĕ çине лекет, унăн харпăрлăхĕ пулса тăрать. Çапла вара çурт-йĕрте пурăнакансем укçа-тенке ăçта расхутланине çулталăкра пĕрре кăна – унччених расхутсен отчетне тата укçа-тенке малашне ăçта расхутлама палăртакан плана çирĕплетнĕ чухне – пĕлме пултараççĕ. Хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçламан организацисем вара час-часах çакăнпа хăйсемшĕн пайталлă усă курма тăрăшаççĕ.

Çĕнĕ система пурнăçа кĕнĕ май, çынсем çирĕппĕнех шанма пултарĕç – укçа-тенкĕпе тĕллевлĕ кăна усă курĕç.

Ятарлă счетсем пулсан ертсе пыракан компанисем укçа-тенке çурт-йĕре шыв, ăшă тата электричество парса тăракан организацисене кăна куçарса пама пултарĕç.

**«Известия».**

Социаллă хӳтлĕх

# Çăмăллăхпа 1794 çын усă курнă

Чăваш Республикинче федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансене пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тӳлеме кайнă расхутсене 50 процент саплаштарма уйăхсерен компенсаци парса пулăшаççĕ. Асăннă çăмăллăх мелне тивĕçекенсен шутне вăрçă инваличĕсем, вăрçă участникĕсем, çар операцийĕсен ветеранĕсем, чирлесе инвалида тухнисем тата ыттисем кĕреççĕ.

Июлĕн 18-мĕшĕ тĕлне Муркаш муниципалитет округĕнче кун пек пулăшăва 1794 çын тата вĕсен çемйи тивĕçнĕ. Компенсаци шучĕпе кун пеккисене 6 млн та 88,98 пин тенкĕ тӳленĕ.

Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракана компенсацие пĕр çурт-йĕршĕн тивĕçтерме пăхнă. Енчен те çуртра çăмăллăхпа усă курма тивĕç çынсем иккĕн е ытларахăн пурăнаççĕ пулсан, пулăшу мелне кашниех пĕрлехи расхутсенчи хăйĕн пайне кура тивĕçет.

**Округри социаллă хӳтлĕх пайĕ.**

Социаллă фондра

# 29 пин ытла çын илет

Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансен уйăхсеренхи укçа тӳлевне пуçласа çирĕплетнĕ чухне ăна социаллă услугăсен пуххине памалла тăваççĕ. Çак вăхăта республикăри федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансем 29 пин ытла çын социаллă услугăсен пуххине натурăпа илсе тăрать. Гражданинăн çавăн пекех услугăсен пуххи вырăнне унăн эквивалентне укçан та илсе тăма право пур. Çапла тăвас тесен октябрĕн 1-мĕшĕччен йышăну тăвас пулать: хăш услугăсене натурăпах илсе тăмалла, хăшĕсене вара укçа тӳлевĕпе улăштармалла? 2023 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса социаллă услугăсен пуххин калăпăшĕ 1469 тенкĕ те 74 пуспа танлашать.

Çуллен заявлени çырма кирлĕ мар. Социаллă услугăсемпе усă курассин йĕрки çын çĕнĕ заявлени çыриччен унччених пекех сыхланса юлать.

Социаллă услугăсен пуххине илсе тăма çар операцийĕсен ветеранĕсен тата вĕсен çемье членĕсен, Тăван çĕрышывăн Аслă вăрçин участникĕсемпе инваличĕсен, «Жителю блокадного Ленинграда» паллăпа наградăланисен, пур ушкăн инваличĕсен, инвалид ачасен, радиацие пула шар курнисен право пур.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

Наци проекчĕ

# Патшалăх çемьесене пулăшать

Вичĕ тата ытларах ачаллă çемьесене патшалăх шайĕнче «Демографи» наци проекчĕпе пулăшу кӳресси малалла пырать. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вичĕ тата ытларах ачаллă çемьесене уйăхсерен тӳлев пама тытăнчĕç. Вăл 11992 тенкĕпе танлашать.

Ку пулăшу çемьесемшĕн пысăк тĕрек пулнине палăртать Оринин территори пайĕнчи Екатерина Захарова. Вăл округри социаллă хӳтлĕх пайне укçа тӳлевне илсе тăрасси пирки ыйтупа тухнă. Захаровсем вичĕ ача ӳстереççĕ. Çемье ял-йыш хушшинче хисепре.

– Эпир кĕçĕн ача çуралнипе уйăхсеренхи укçа тӳлевне тивĕçрĕмĕр. Патшалăх пулăшăвĕпе эпир кăмăллă. Ачаллă çемьесене çапла укçан пулăшса пынишĕн тав тăватпăр. Çавăн пекех социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсене пире кăмăл туса йышăннишĕн тав тăватпăр.

Пирĕн çемьери Максимпа Юлия – шкул ачисем. Кĕçĕнни, Павлик, часах «Золушка» ача садне çӳреме пуçлĕ. Ачасемпе мухтанма юратмастпăр. Çакна калама пулать, аслисем шкулта «5», «4» паллăсемпе вĕренеççĕ. Çулла пуçлансанах шкул çумĕнчи лагерьте канчĕç.

Çак кунсенче вĕсем ача-пăча туризмĕн проектне хутшăнса «Многоликая Чувашия» программăпа усă курчĕç. Икĕ кун экскурсисенче пулчĕç. Çакăншăн эпир пурте савăнтăмăр. Ачасен туризмне çапла майпа йĕркелени питĕ лайăх, курса çӳрени вĕренӳре те пулăшса пырĕ, тавракурăма анлăлатĕ. Çавăн пекех ачасем шкул практикинче пулчĕç, кукамайсем патне



кайса çӳреççĕ, мамакпа, маçакпа килĕштерсе пурăнаççĕ. Ача вичĕ çул тултариччен отпускра пулма май килни савăнтарать мана, капла ачана пăхма майсем ытларах.

Мăшăрăм Николай «Газпром газораспределение Чебоксары» акционер обществин филиалĕнче слесарь-водительте тăрăшать, кулленех ĕçе çӳрет. Вăхăт тупса канмалли кунсенче, уявсенче Элĕке кукамайсем патне кайса çӳретпĕр. Çемье уявĕсене тума тăрăшатпăр. Эпĕ хам библиотека системинче ĕçлерĕм, халĕ пĕчĕк Павлика пăхатăп. Кĕçĕн ывăл икĕ çулта, – тет Екатерина Захарова.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Пуçарулăх бюджечĕ

# «Пирĕн ĕçпе кăмăллă пулччăр».

## Çапла каларĕç Тереç ялĕнче шыв пăрăхĕ хума хутшăнакансем



Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче ун чухнехи Оринин ял Совет территорине кĕрекен ялсенче пăрăхсем хурса çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе чылай ĕçленĕ. Тереç ялĕнче те 1973 çулта «Восток» колхоз правленийĕ (ертÿçи Н.Я. Васильев пулнă) çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăçларĕ.

Унтанпа çур ĕмĕр те иртрĕ ĕнтĕ. Вăхăт иртнĕ май, чугун пăрăх та кивелнĕ пирки юрăхсăра тухать, пахалăхне çухатать. Çавна май юлашки çулсенче шыв пăрăхĕ унта-кунта шăтма, çурăлма е татăлма пуçларĕ. Ял çыннисен хĕлле е çулла çавăн пек пăтăрмахсене юсаса шывпа усă курма сахал мар тертленме тиврĕ: шăтнă е çурăлнă пăрăха йĕркене кĕртме тăприне те тарăн чавмалла, юсав ĕçне те пахалăхлă пурнăçламалла т. ыт. те.

Ял çыннисем çакăн пек çитменлĕхпе килĕшсе пурăнассине пăрахăçларĕç. Пĕр шухăшлă пулса çак ыйтупа Оринин территори пайĕн пуçлăхĕ В. Пушкова патне те тухрĕç. Вăл ял çыннисемпе тĕл пулса шывпа малашне те йĕркеллĕ епле тивĕçтересси пирки каласа пачĕ. Çапла вара тереçсем урамсенчи шыв пăрăхĕсене пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса çĕнĕрен хурса тухма йышăнчĕç.

Акă кĕтнĕ кун та çитрĕ. Пирĕн ялта та шыв пăрăхĕсем хурас ĕç пуçланчĕ. Ăна Андрей Алексеев ертсе пыракан «Строительная компания «Платинум» ООО пурнăçлать. Андрей Сергеевич ĕç кал-кал пытăр тесе тăрăшать, ĕçленекенсем патне кулленех çитет, пластик пăрăх хурассипе ĕçсем мĕнле пынипе интересленсех тăрать, вăхăтра сĕнÿсем те парать.

Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе хутшăнакансен йышĕ пысăк мар. Вĕсенчен пĕри – Владимир Петров механизатор-экскаваторщик. Хĕрлĕ Чутай округĕнчи Тури Çĕрпÿкассинчен. Хăйне шанса панă техникăна тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттерсе шыв пăрăхĕ хума канав чавса пулăшать. Палăртнă вырăнсенче тимĕр-бетонункăсем те хăех вырнаçтарать. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тирпейлĕ пурнăçлать. Унăн тăрăшулăхне ял çыннисем те çийĕнчех асăрхарĕç.

– Ывăнма та пĕлмест пулмалла, апатланма чарăннисĕр пуçне агрегата кунĕпех ĕçлеттерет. Ĕçчен пулни куçкĕрет. Пирĕншĕн, ял çыннисемшĕн, ырми-канми тăрăшнăшăн чун савăнать, – çапла ăшă кăмăлпа пĕлтерчĕ Тереçри А. Ботников, хăйĕн кил-çурчĕ умĕнче урамра çĕр чавакан агрегата ĕçлеттерекен Владимир Леонидович механизатор-экскаваторщикăн ĕçне ырласа. – Хастара тав туса ĕçсенче ăнăçу тата çирĕп сывлăх сунас килет.

Владимир Петров механизаторта вунă çул ытла вăй хунă, ун хыççăн механизатор-экскаваторщик ĕçĕнче пилĕк çул ытла тăрăшать. Вăл тăван республикăри чылай ялта пулса халăха ĕçмелли шывпа тивĕçтерме пăрăхсем хума хутшăннă.

Шыв пăрăхĕсем хурасси кал-кал пытăр тесе çавăн пекех Александр Любимовпа Дмитрий Сарамбаев тата Роман Маловпа Федор Сарамбаев та вăй-хала шеллемесĕр тăрăшаççĕ. Вĕсем пурте кÿршĕллĕ Мари Эл республикинчен. Вĕсенчен кашниех урамсенче шыв пăрăхĕсем хурас тата çынсен кил-çурчĕсем патне илсе çитерес тĕлĕшпе яваплăха туйса вай хурать. Хăйсен ĕçĕпе кайран ял çыннисем яланах кăмăллă пулччăр тата ырăпа çеç асăнччăр – çав тĕллевпе тăрăшаççĕ вĕсем.

Паллах, шыв пăрăхĕсен сетьне çĕнетме сахал мар укçа-тенкĕ кирлĕ. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе пурнăçлакан ĕçсем валли вара республика чылай укçа-тенкĕ уйăрса парса пулăшать. Расхутсене саплаштарма пулăшнăшăн Чăваш Ен Пуçлăхне Олег Николаева, Муркаш муниципалитет округ пуçлăхне Алексей Матросова тата хăйĕн тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлакан Оринин территори пайĕн пуçлăхне Валентина Пушковăна ăшшăн тав туса, вĕсене ĕçĕсенче малашне ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунас килет. Пĕрлĕхре – вăй тата ăнăçу. Малашне те çапла пултăрччĕ.

**А. ШАРИКОВ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: Владимир Петров механизатор-экскаваторщик.**

Пирĕн интервью

# Çурт-йĕр тума тытăниччен мĕн пĕлмелле?

**Хальхи вăхăтра харпăр хăй ĕçне пуçарса ярас текенсем сахал мар. Вăл шутра фермер ĕçне пуçăннисем пурри те савăнтарать – яллă вырăнта ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем кирлех.**

**Редакцине иртнĕ кунсенче шăпах ял хуçалăхне аталантарассипе çыхăннă ыйту килчĕ.**

***«Эпĕ фермер ĕçне пуçăнас кăмăллă. Ĕçе йĕркелесе пыма тытăнсан планра склад тăвасси те пур. Мĕн хыççăн мĕн тумалла çак ĕçре? Хаçатра ăнлантарса парсан лайăх пулĕччĕ», – терĕ редакцине шăнкăравланă арçын.***

**Кун пек чух çĕр лаптăкĕ арендăра е харпăрлăхра пурри кăна мар, склад тăвасси проект ĕçĕпе те çыхăннăран эпир Муркашра вырнаçнă «Инттехс» архитектурăпа проект организацийĕн ертÿçипе Альберт Ивановпа калаçу пуçартăмăр.**

**Асăннă ыйтăва ертÿçĕ çапла хуравларĕ:**

– Пĕрремĕшĕ – çĕр лаптăкĕ е арендăра, е харпăрлăхра пулмалла. Çакăн хыççăн çак çĕр лаптăкĕ вырнаçнă çĕрĕн градостроительство планне илмелле. Малалла вара проект, кирлĕ пулсан смета та хатĕрлемелле. Çак проектпа строительство ĕçĕсем тума вырăнти влаç органĕнчен ирĕк илмелле. Строительство ĕçне вĕçлесен çуртăн техпланне туса объекта янин актне çырмалла. Юлашкинчен патшалăх регистрацине туса иртмелле. Каласа хăварас пулать, объекта регистрацилесен вăл вырнаçнă çĕр те пĕрле харпăрлăха куçать.

**– Альберт Николаевич, вактĕвек, калăпăр, информаци енчен пулăшу кирлĕ чух эсир вĕсене пулăшма пултаратăр-и?**

– Муркаш тăрăхĕнче пысăк тĕреклĕ хуçалăхсемпе пĕрлех фермер хуçалăхĕсем йĕркеленсе пыни чăнах та кăмăла çĕклет. Май пур таран эпир вĕсене пулăшса пыратпăр. Вĕсенчен нумайăшĕ çак ĕçе пуçласа йĕркелесе ярать, çавăнпа та вĕсен ыйту та чылай. Нумай чухне эпир вĕсене информаци енĕпе те пулăшу паратпăр, паллах, нимĕнле укçа-тенкĕ тÿлевĕсĕрех. Кашни ĕç кунĕнчех ирсерен эпир вĕсемпе тĕл пулма пултаратпăр. Район хаçачĕн редакцийĕ вырнаçнă çурт ăçтине пурте пĕлеççĕ, эпир çав çуртра вырнаçнă, иккĕмĕш хутра. Шăнкăравлас текенсем валли 8(83541)62-6-03 е 8-937-378-88-28 номерсене те каласа хăваратăп.

Тепĕр саманта та асăнсах хăварам: проект тата смета документчĕсене хамăр çĕршывра вырнаçнă, çак ĕçпе специализациленнĕ кирек хăш организаци те тума пултарать. Анчах та çав организацин хăйĕн ĕçне туса пыма кирлĕ пур документ та пуррине шута илмелле. Чи малтанах организаци хăйне хăй йĕркелекен организаци членĕ пулни, патшалăх регистрациленĕ специалист пурри, проект ĕçĕсене страхлани тата ытти те пулмалла. Ĕçе пуçличчен килĕшÿ çырса çирĕплетмеллине ан манăр. Çак йĕркене пăхăнсан вырăнти влаç органĕсем строительство ĕçне пуçăнма ирĕк парасси те пăтăрмахлă пулмасть.

**– Эсир ертсе пыракан организаци проект ĕçĕсем тума тытăнни те чылай пулать. Çак вăхăтра ял хуçалăха аталантарас текенсене проектпа смета документчĕсене хатĕрлесе пани те пулнах пулĕ? Е пÿрт тăвас ыйтупа ытларах пыраççĕ?**

– Пирĕн пысăках мар предприяти архитектурăпа проект ĕçĕсем тума пуçланăранпа 15 çул çитрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăтра эпир çынсем валли çĕр-çĕр кил-çурт проекчĕ туса хатĕрлерĕмĕр. Хамăр тăрăхра та, республикăри ытти кĕтесри производство объекчĕсем тата обществăлла çуртсем валли вун-вун проект туса панă. Территорисене тирпей-илем тата хăт кĕртмелли вырăн йĕркелеме те проект сахал мар тунă.

Ял хуçалăх сферинче, фермерсен юхăмĕ аталаннă май, республикăри конкурссене хутшăнма çак çулсенче 50 ытла проект хатĕрленĕ. Вĕсенчен нумайăшне пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ. Паянхи кун çав объектсем ĕçлени харпăрçисене тупăш парать. Сăмахран, Патăрьел тăрăхĕнчи Чабатов хресчен фермер хуçалăхĕнче эпир тунă проектсемпе пулă ĕрчетмелли цех, выльăх-чĕрлĕх продукцине тирпейлемелли комплекс питĕ лайăх ĕçлеççĕ. Пирĕн проектсемпе тунă Тăвай, Канаш, Комсомольски тăрăхĕсенче мăйракаллă шултра выльăх ĕрчетмелли, сĕт-çу туса илмелли комплекссем ĕçлеççĕ. Канаш тăрăхĕнчи Шăхасанта вырнаçнă хĕвелçавăрăнăш çăвĕ туса кăларакан производство объекчĕсене те эпир хатĕрленĕ проект тата смета документчĕсем тăрăх тунă... Кунта пурне те асăнса çитерме те май çук.

**– Уйрăм çурт-йĕр пирки калаçар. Альберт Николаевич, пурнăç аталанăвне кура хальхи вăхăтра çурт-йĕр тăвас текенĕн ку енĕпе ыйту сахал мар пулĕ?**

– Çапла, пурнăç улшăнсах пырать. Каламалла, пĕр çемье валли пурăнмалли çурт-йĕр тума проект никам та ыйтмасть. Ĕçе пурнăçлама тата кайран пÿрте регистрацилеме проект кирлех те мар. Çапах та хальхи вăхăтра пĕрререн ытларах хутлă, компактлă çурт-йĕр тăвас текенсем сахал мар. Çавăнпа та кун пек чух проект туни кирлех тесе шутлатпăр. Пÿрте туса лартнă хыççăн йăнăшсене тÿрлетме чылай йывăртарах тата хакла ларать. Паллах, проект тăвасси (эпĕ пур енлĕ шутласа тунă тĕрĕс проект пирки калатăп) йÿнĕ мар, анчах та вентиляци, канализаци тĕрĕс йĕркелесси, кухня, ванна пÿлĕмĕсенче, туалетра оборудование тĕрĕс вырнаçтарасси, çÿле хăпармалли картлашкана тĕрĕс вырăнта тăвасси тата ытти те проектпах пулмалла.

Тата тепĕр сĕнÿ пур: çурт-йĕр тума тытăниччен, тархасшăн, территори пайне кĕрсе тухăр. Унта сире пÿрте юнашар хуçалăхран миçе метртра вырнаçтармаллине калĕç. Кун пек ыйтусем çине чылай чухне хамăр та хуравлатпăр паллах.



**– Харпăрлăхри е арендăри çĕр лаптăкĕ çинче мĕнле йышши объект тума ирĕк пуррине те малтанах пĕлмелле пулĕ, унсăрăн каллех пăтăрмахлă пулса тухать.**

– Çапла. Сирĕн çĕр лаптăкĕ çинче мĕнле объект тума юранине градостроительство планне пăхса пĕлме пулать. Çавăнпа та ку документпа вырăнти территори пайĕнче паллашмалла. Проект тăвас пулсан та çак документ кирлĕ.

Кĕскен каласан, строительство ĕçне пуçăниччен малтан çĕр ыйтăвне татса пама тăрăшмалла. Калярăмăр ĕнтĕ, çĕр латăкĕ е арендăра, е харпăрлăхра пулмалла. Арендăра пулсан унта сире кирлĕ çурт-йĕр тăвассине пăхса хунă-и – çакна та пĕлмелле.

Халĕ строительство ĕçне йĕркеллĕ туса пыма тытăнни палăрать. Вырăнти влаç органĕсем çынсене строительство объектне тăвас ĕçе мĕнрен пуçăнмаллине тата мĕнле туса пымаллине ăнлантарни питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен йăнăша тÿрлетме йывăр, туса лартнă çурта вырăнтан та куçараймăн.

**– Сирĕн коллектив пысăк маррине пĕлетпĕр. Апла пусан та халăх сирĕн пата час-часах утнине асăрхама пулать ...**

– Пирĕн коллектив чăнах та пĕчĕк, штатра проект тăвакан виçĕ специалист анчах. Çапах та вĕсенчен кашниех пĕр проектпа ăна тытăннинчен пуçласа вĕçне çитеричченех тимлет. Проект тума ыйтнă çынпа вĕсем темиçе хут та тĕл пулаççĕ, проекта компьютерпа тĕрлĕ виçере курма май пур, пичетлесе те параççĕ, сĕнÿсене шута илеççĕ. Пысăках ĕç укçи тÿлейместпĕр пулин те, пирĕн патра яланах тÿрĕ кăмăлпа тăрăшакан специалистсем ĕçленĕ, ĕçлеççĕ те. Хăшĕсем ĕç опычĕ пухнă хыççăн Мускава, Питĕре ĕçе вырнаçрĕç, Шупашкарта та çак ĕçе малалла туса пыракансем пур. Ку пире савăнтарать паллах, анчах та пире кунта, вырăнта, çак ĕçе туса паракансем те кирлĕ. Пирĕн ĕç технологипе тата компьютер программипе çыхăннă. Çавăнпа та пирĕн патра ĕçлеме инженер, строитель пулни анчах çителĕксĕр, унăн паянхи технологисене пĕлес пулать, Интернетра пур кĕтесе, шăтăка «кĕрсе тухма» пĕлни кирлĕ.

Акă халĕ те пирĕн пĕр ваканси пур, специалист кирлĕ. Паллах, эпир ăна вырăнта вĕрентсе ĕçе хăнăхтаратпăр.

**– Альберт Николаевич, тавах кăсăклă калаçушăн. Редакцие шăнкăравланă çыннăн ыйтăвне эсир питĕ тĕплĕн хуравларăр.**

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

«Кулибинсем» хамӑр хушӑрах

# Курӑк та ҫулать, кустӑрма та ҫавӑрать



***Курӑк та ҫулать, велосипед кустӑрмине те ҫавӑрать... Чылайӑшӗ сӑмах мӗн пирки пынине ӑнлансах илеймерӗ пулӗ. Кашмаш ялӗнче пурӑнакан Анатолий Шапошниковшӑн вара хуравӗ паллӑ. Ку вӑл – бензинпа ӗҫлекен триммер. Триммер двигателӗпе усӑ курса шӑпах ҫакӑн пек агрегат хатӗрленӗ вӑл.***

***– Шухӑшӗ тахҫанах пулнӑччӗ-ха. Триммерпа ҫулталӑкра пӗр-икӗ хут усӑ куратӑн та, кайран курӑк ҫулмалли ҫак агрегат ҫулталӑк хушши выртать кӑна. Эпӗ вара ӑна ҫу каҫа чиперех усӑ курмалла майлаштартӑм. Ытлашши нимӗн те расхутланмалла пулмарӗ. Сварка аппарачӗ кирлӗ пулчӗ кӑна. Триммер двигательне велосипедӑн хыҫалти ларкӑчӗ ҫине вырнаҫтартӑм, ларкӑча лайӑххах ҫирӗплетрӗм. Триммер двигателӗпе кустӑрма звездочкисене сӑнчӑр передачипе сыпӑнтармалли кӑна юлчӗ. Пулчӗ те. Моторлӑ велосипед хатӗр те, – каласа парать вырӑнти ӑста.***

***Чӑннипех те меллӗ пулса тухнӑ. Курӑк ҫулма вӑхӑт ҫитсен пӗр агрегатпах курӑкне те ҫулатӑн, кирлӗ чухне вара, велосипедӑн педальне ҫавӑрас килмест пулсан, пӗр шиксӗрех унпа чиперех ҫил хӑваласа ҫӳреме те пултаратӑн.***

***Ҫил хӑваласа ҫӳресси пӗр япала та, анчах кунта ҫакна та манма юрамасть. Ҫул ҫинче кун пек транспорт хатӗрӗпе ҫӳресси хӑрушлӑхпа та ҫыхӑннӑ ӗнтӗ. Апла пулсан, ҫул-йӗр правилисене пӑхӑнасси – пӗлтерӗшлӗ ыйтусен шутӗнче. Унпа ҫӳрекенӗн уйрӑм категори удостоверенийӗ те кирлӗ. Анатолий Шапошников вара ку енӗпе хӑйӗн пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулни пирки каларӗ.***

**Сӑн ӳкерчӗкре: вырӑнти ӑста хӑй туса хатӗрленӗ триммер-велосипедпа.**

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

Ҫӗр ыйтӑвӗ

# Ҫӗр лаптӑкне тӗрӗс мӗнле виҫмелле?

***Официаллӑ ҫӑл куҫсенчен пӗлтернӗ тӑрӑх, Чӑваш Республикинче 336 пин ҫӗр лаптӑкӗн тӗрӗс чиккине палӑртман. Ку питех те пысӑк лаптӑк шутланать.***

***Кадастр учетне чылайӑшне патшалӑх актне тӗпе хурса илнӗ. Документсене тивӗҫлӗ шайра туса ҫитермен пирки вӗсен координачӗсем тӗрӗс мар.***

***Ҫӗр лаптӑкӗн тӗрӗс чиккине палӑртасси, ҫӗре виҫес йӗрке пирки Росреестрӑн Чӑваш Енри управленийӗ ҫумӗнчи обществӑлла канаш пайташӗ, «Ассоциация кадастровых инженеров Поволжья» организацин регионти представителӗ Елена ЕРМАКОВА кадастр инженерӗ каласа кӑтартать:***

– Ҫӗр виҫме кадастр инженерӗ патне ыйтупа тухиччен ҫӗр лаптӑкӗ карттӑра курӑннине, унӑн чиккисене палӑртнине Росреестр сайтӗнчи публичӑй кадастр картти ҫине пӑхмалла.

Тепӗр чухне ҫӗре виҫтернӗ, межевани ӗҫӗсене тунӑ, анчах та харпӑрҫӑ аллинче ҫав документсем ҫук тӗслӗхсем тӗл пулаҫҫӗ.

Ку ытларах чухне тин кӑна ҫӗр илнӗ ҫынсен пулма пултарать. Енчен те сирӗн ҫӗр лаптӑкӗн чикки ҫӳлерех асӑннӑ публичӑй картта ҫинче ҫук пулсан, кирек епле кадастр инженерӗ патне ыйтупа тухма пулать.

Хӑвӑра килӗшекен специалиста Интернет урлӑ тупма пулать е ҫывӑхри кадастр инженерӗсем патне ыйтупа тухмалла.

Ҫӗр виҫтерсе документ тума шухӑшланӑ ҫыннӑн алӑра ҫӗр документӗ, паспортпа СНИЛС кирлӗ.

Сире кадастр инженерӗн условийӗ килӗшрӗ пулсан, унпа килӗшӳ тумалла. Ҫак ӗҫ хакӗ лару-тӑрӑва кура 5 пин тенкӗрен пуҫласа 15 пин тенкӗ таран пулма пултарать.

Кадастр инженерӗ вырӑна ҫитсе ҫӗр чиккисене палӑртать, межевани планне хатӗрлет. Чикӗсене тӑтӑклӑн палӑртасси пирки юнашарти харпӑрҫӑсемпе калаҫса татӑлмасӑр май ҫук.

Енчен те чикӗри харпӑрҫӑсене тупма май ҫук пулсан, вырӑнти хаҫатра ҫакӑн пирки пӗлтерӳ памалла. Тӗрӗссипе ҫӗр чиккинчи пускилсене инженерӑн шырамалла, ҫӗр хуҫин вара ҫак ӗҫре ӑна пулӑшмалла.

Килӗшӳ ӗҫӗсене туса пӗтернӗ хыҫҫӑн кадастр инженерӗ межевани планне харпӑрҫа диск ҫине ҫырса парать. МФЦра чикӗсене кадастр учетне тӑратаҫҫӗ, учета илесси тӳлевсӗр.

Енчен те кадастр инженерӗ ҫак ӗҫре йӑнӑшнӑ пулсан, вӑл тӑракан организацие (СРО) ыйтупа тухмалла. Унта сирӗн ыйтӑва татса пама пулӑшӗҫ.

Ҫавӑнпа та ҫӗр документӗсене вӑхӑтра тумалла, чиккисене те вӑхӑтра палӑртмалла. Ку ӗҫе кая хӑвармасӑр пурнӑҫламалла.

Шухӑш

# Хаҫатӑн кивӗ номерӗсене цифра ҫине куҫарасчӗ

Район хаҫачӗ вӑл – районӑн летописӗ. Вӑл хӑйӗн содержанийӗпе энциклопедирен те пуянрах, интереслӗрех. Вӑл тухнӑ тапхӑрта район ҫыннисем унӑн страницисенче ку енӗн иртнӗ историне, ҫакӑнта ҫуралса, ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнче пурӑнса творчество пурнӑҫӗпе интересленнӗ паллӑ ҫынсем – пур сферӑри ӗҫ ӑстисем, ученӑйсем, вӗрентекенсем, писательсем, патшалӑх тата парти деятелӗсем, вӑрҫӑпа ӗҫ паттӑрӗсем, ҫар ҫыннисем, ӗҫре малта пыракансем ҫинчен ҫӗршер очерк, тӗрленчӗк вуларӗҫ тата вулаҫҫӗ.

Ертӳҫисем, ячӗсем ылмашӑнсан та, хаҫат хӑйӗн миссине шанчӑклӑ пурнӑҫлать, саманапа пӗр тан утать. Паян редакцие чӑваш чӗлхипе хаҫат пичетлесе кӑларакан пичет изданийӗ тесе кӑна калама пулмасть. Район ҫыннисен, республика халӑхӗн, пӗтӗмлетсе каласан, Муркаш округӗн ҫӗнӗ хыпарӗсемпе паллашса пыракан кашни ҫын «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» редакцийӗн Интернет уҫлӑхӗнче хӑйӗн сайчӗ пуррине пӗлет. Ҫак сайтра округ журналисчӗсен статйисене чӑвашлах вырнаҫтараҫҫӗ. Сайта кунне пиншер ҫын кӗрет, вӗсенчен чылайӑшӗ чӑрӑнса, унти статьясене вулать. Ҫавӑн пекех редакци коллективӗн хаҫатӑн социаллӑ сечӗсенче тата мессенджерӗсенче йӗркеленӗ ушкӑнсенче пиншер тусӗ-ҫырӑнаканӗ пур.

Ку питӗ аван. Анчах этем паянхи кунпа кӑна пурӑнмасть. Унӑн паянхи куна ӑнланас тесен иртнине те пӗлмелле. Ак ҫакӑнта сиксе тухать те пӗр кӑлтӑк. Район хаҫачӗн кивӗ номерӗсене электрон майпа вулама май ҫук.

Округ архивӗнче район хаҫачӗн номерӗсем темшӗн 1999 ҫулччен ҫеҫ. Темшӗн ку ӗмӗрти хаҫат номерӗсене пуҫтармаҫҫӗ, упрамаҫҫӗ. Библиотекӑсенче хаҫатсене тирпейлӗ упрамаҫҫӗ, пур хаҫат номерӗ те ҫук. Хӑш-пӗр номерти кирлӗ статьясене те вупӑр ҫисе янӑ, те такамсем хачӑпа касса илнӗ. Ҫулӗсемпе хаҫат номерӗсене пӑтратса янӑ. Тепӗр тесен, пурте Шупашкарти архива е Республика библиотекине кайса ҫӳреймест. Пӗр сӑмахпа, кун пек йӗркесӗрлӗхсем хальхи пурнӑҫ шайне тивӗҫтермеҫҫӗ.

Мӗн сӗнесшӗн? Сӗнтӗрпе Муркаш районӗсен пур хаҫачӗсене те цифра ҫине куҫарса Муркаш округӗн библиотекин сайтӗнче те, округ сайтӗнче те электрон архива упрама хумалла мар-ши? Ку ӗҫе тума Муркаш округӗн ертӳлӗхӗнчи культура пайӗнче те, библиотека системинче те, архивӗнче те ҫынсем ҫитеҫҫӗ. Шупашкарти архивсенче цифра ҫине куҫармалли миллионшар тенкӗ тӑракан аппаратсем пур. Хирӗҫ калама хуҫасен пӗр аргумент пур – укҫа ҫук. Укҫине округ Пухӑвӗн депутачӗсен килес ҫул валли бюджетра пӑхса хурас пулать.

Паллах, ку кӑткӑс ӗҫ. Апла пулин те Мускавран хушу парасса кӗтсе лармалла мар, хамӑрӑн та кӑштах хускалмалла. Иртнине те упрамалла, унпа пӗрлех малашлӑх ҫинчен шутламаллине те тӗпе хумалла.

**Олег ТАРАСОВ.**

Ҫемье

# Телей кайӑкӗ алӑрах пултӑр

Юнкӑ тӑрӑхӗнчи Валентина Андреевнӑпа Станислав Евграфович Лаптевсем телей кайӑкне алӑра ҫирӗп тытаҫҫӗ, пӗрре курса тупнӑ юратӑва упраҫҫӗ, 50 ҫул пӗрне-пӗри килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ.

Ҫамрӑксен чун хӗлӗхӗ пӗрремӗш хут Мӑн Сӗнтӗрте туртӑннӑ. Тин кӑна шкултан вӗренсе тухнӑ ҫамрӑк хӗр Валентина апат-ҫимӗҫ лавккине вӑхӑтлӑх сутуҫӑ пулӑшуҫи пулса ӗҫе вырнаҫнӑ. Ноябрь уйӑхӗнче пӗр ирхине ҫапла ҫӳллӗ яштака каччӑ лавккана кӗнӗ. Валентинӑпа Станислав куҫӗсем пӗрремӗш хут тӗл пулнӑ та ҫав вӑхӑтранпа вӗсем хушшинче юрату вӑйланса кӑна пынӑ. Телей кайӑкне алӑран вӗҫертес мар тесе ҫамрӑксем тепӗр виҫӗ уйӑхран, 1973 ҫулхи февралӗн 17-мӗшӗнче, туй тунӑ. Официаллӑ йӗркепе вара вӗсем июнӗн 16-мӗшӗнче ҫырӑннӑ.

Ҫав вӑхӑта вӗсем паянхи пекех лайӑх астӑваҫҫӗ. Мӑшӑр каланӑ тӑрӑх, ун чухне хӗвеллӗ те ӑшӑ кун пулнӑ, туй чӑваш йӑли-йӗркипе иртнӗ. Мӑшӑрлану ӗмӗрлӗхе пуласса вӗсем шанса тӑнӑ, ҫемье телейне ӗмӗрлӗхе упранӑ. Станиславӑн ашшӗпе амӑшӗ Валентинӑна хӑйсен ачи пекех кӑмӑлласа йышӑннӑ, яланах пулӑшса пынӑ, ӳпкелешесси пулман.

Станислав Евграфович хӑйӗн ӗҫ ӗмӗрне строительство организацийӗнче автокран машинистӗнчен пуҫланӑ, каярах «Новая Юнга» хуҫалӑхра водительте ӗҫленӗ. Тивӗҫлӗ канӑва тухсан та вӑл ӗҫрен часах уйрӑлман, 2013 ҫулччен пысӑк тиевлӗ машина водителӗ пулнӑ. Водитель стажне 46 ҫула ҫитернӗ.

Валентина Андреевна малтанхи ҫулсенче строительство организацийӗнче секретарь-машинисткӑра тӑрӑшнӑ. Каярах чылай ҫул «Росгосстрах» страхлав организацийӗн районти уйрӑмӗнче страхлав агентӗнче ӗҫленӗ. Асӑннӑ уйрӑм ертӳҫи Валерий Вязов унӑн тӑрӑшулӑхне пысӑка хурса хаклать.

Лаптевсем – ӗҫ ветеранӗсем, тӗрлӗ Хисеп хучӗпе Тав ҫырӑвне сахал мар тивӗҫнӗ. Вӗсемшӗн пенси ҫине тухни чӑрмав мар, хушма хуҫалӑхра, пахчара тӑрӑшаҫҫӗ. Мӑшӑр ҫамрӑк чухнехи пекех ҫивӗч те вӑрвар.

Вӗсем икӗ хӗрпе икӗ ывӑл ӳстерсе пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ. Паянхи кун телейлӗ мӑшӑр вунӑ мӑнукӗн тата пӗр кӗҫӗн мӑнукӗн ҫитӗнӗвӗсемпе савӑнса пурӑнать.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**



Обществăлла организацисенче

# Çынна чун апачĕ те кирлĕ







*Çын апат-çимĕçпе кăна тутă пулмасть, ăна чун апачĕ те кирлĕ. Харпăр хăйне тăватă стена хушшине хупса лартни çынна пусарать, пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçни чуна уçать. Çак тĕллевпе июлĕн 21-мĕшĕнче куç курманнисен обществăлла организацийĕн тата инвалидсен обществăлла организацийĕн округри пайташĕсем уçă сывлăшра пĕрле пухăнчĕç.*

Ун пек чухне кăсăклă калаçу тупăнать. «Милосердие» клуб пайташĕсене, паллах, ыттисене те округри централизациленĕ библиотека ĕçченĕ Алина Любимова Казански Турă Амăшĕн турăшĕ çинчен тĕн калаçăвĕ ирттерчĕ, халăх сăнавĕсемпе кăсăклантарчĕ. Ăс-тăна çивĕчлетни вара нихăçан та ытлашши мар.

Мероприятие Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова хутшăнчĕ.

– Эсир район аталанăвне пысăк тӳпе хывнă, ăна пуянлатассишĕн тăрăшнă, халĕ те эсир пуçарулла тата активлă, округ ĕç-хĕлне хутшăнатăр. Тавах сире пурнăçа хакланишĕн. Сире муниципалитет пуçлăхĕ Алексей Матросов ячĕпе тата хам ятран сирĕн ĕçшĕн, пурнăçри активлăхшăн тав тăватăп, çирĕп сывлăх сунатăп, – терĕ Лилия Тарасова пухăннисене ырă сунса.

Халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен Муркашри центрăн ертӳçи Ольга Иванова асăннă центр ĕçĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Вăл палăртнă тăрăх, ялсенче харпăр хăй тĕллĕн пурăнайман çынсем, пĕччен пурăнакан ватă çынсем пулсан вĕсем валли социаллă ĕçченсем çирĕплетме хатĕр. Ольга Васильевна тĕл пулăва хутшăннисене ырă сăмахпа хавхалантарчĕ, вĕсем ăсталăхпа республика шайĕнче те палăрнине пĕлтерчĕ.

Ăсталăх тенĕрен çакна та палăртса хăвармалла. Хунтăкассинчи Вячеслав Пагеев район хаçачĕпе тачă çыхăну тытма пуçларĕ, номерсенче унăн калавĕсем тухса пыраççĕ. Çавăн пекех вăл сăвă йĕркисем шăрçалама та ăста. Тĕл пулăва хутшăннисем вăл çырнă «Мое солнышко на темном небе» кĕнекипе паллашрĕç, шашка-шахматла вылярĕç, кăсăклă историсем каласа кăтартрĕç. Шел, кунĕ çиллĕ пулнăран пулă тытса киленме май килмерĕ.

Мероприятие икĕ организаци пайташĕсем хутшăнни кăсăклăрах та пулчĕ. Куç курманнисен организацийĕн округри уйрăмĕн ертӳçи Андриян Иванов каланă тăрăх, планпа пăхнипе тĕтăшах тĕл пулусем ирттермелле, çĕнĕлĕхсемпе паллаштармалла. Сӳтсе явмалли вара сахал мар, тĕл пулусем пĕр-пĕринпе çывăхлатаççĕ.

Мероприятире Даниил Карпулин (**иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре сылтăмри**) инвалидсен округри обществăлла организацине ертсе пыма тытăннине пĕлтерчĕç. Малалла вăл пĕрле килĕштерсе ĕçлеме шантарчĕ.

Раççей Федерацийĕн социаллă фончĕн Чăваш Республикинчи Муркаш округĕнчи клиент службин ертӳçи Наталия Савельева социаллă страхлав тата пенсипе тивĕçтерессин законодательствисемпе паллаштарчĕ.

Туслă тĕл пулу вĕри шӳрпепе, купăс каласа юрланипе вĕçленчĕ. Ку енĕпе Шетмĕпуç территори пайĕнчи хастар çынсем тăрăшрĕç. Çавăн пекех Андриян Иванов мероприятие ирттерме Муркаш райпо предприятийĕ тӳпе хывнине каларĕ.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Саламлатпăр

Пирĕн чи çывăх çыннăмăра, хисеплĕ аппана – Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăнакан **Галина Петровна ВАРЮХИНĂНА** сумлă юбилей ячĕпе пур кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Вăрманти чи мăнаçлă юман евĕр çирĕп сывлăх, ирхи сывлăм пек таса кун-çул, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Умри çулу яланах анлă та çутă, такăр пултăр, мĕн шутланисем пурнăçлансах пычăр, кĕрекӳ çывăх çынсемпе ялан тулли пултăр.

Пурăн ĕмĕр сывлăхпа кăна,<br>
Ырă кăмăл ăшăттăр чунна.<br>
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,<br>
Пурăнма сунатпăр 100 çулччен.

**Ăшă салампа: Мазиковсен, Марковсен, Ивановсен çемйисем ачисемпе.**

Юратнă аннене, ырă кăмăллă асаннене – Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăнакан **Галина Петровна ВАРЮХИНĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Анне пурри – чи пысăк телей. Анне пире чун панă, ăса вĕрентнĕ, ĕçе хăнăхтарнă, пурнăç çулĕ çине тăратнă. Эпир сана уншăн тав туса сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр. Çирĕпрен те çирĕп сывлăх сунса вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Салампа: виçĕ ывăлĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, 2 кĕçĕн мăнукĕ.**

Чи çывăх та хаклă, юратнă çыннăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Валентина Михайловна РЕПИНĂНА** сумлă юбилейпа – 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Килекен кашни кун сана савăнăç парнелетĕр, пурнăçра киленсе пурăнма хавхалантартăр. Турри вăй-хăватне патăр, чир-чĕртен упратăр. Эпир сана çирĕп сывлăхпа, ачусемпе мăнукусен пархатарне курса нумай-нумай çул пурăнма вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Хастарлăху ан иксĕлтĕр, тăванусен юратăвĕ ăшăтса тăтăр. Эпир сана чун-чĕререн хисеплетпĕр, юрататпăр.



**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, тăванĕсем.**

Пирĕн ылтăн-кĕмĕлтен те хаклă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Зоя Максимовна РОМАНОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Тĕнчери мĕнпур ыррине сунатпăр сана – тулăх пурнăç, куç тулли телей, çирĕпрен те çирĕп сывлăх. Мĕн шутланисем, ĕмĕтленнисем яланах пурнăçланса пычăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн чи пысăк телей.



**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.**

Тухтăр канашĕ

# Ĕне çилли пăсăлнă, мĕн тумалла?

**Ĕнесене çу кунĕсенче улăхра çӳретнĕ вăхăтра çилĕ тата ӳт-тир япăхни час-часах тĕл пулать. Çакăн сăлтавне пĕлес тесе тата хаçат вулакансем ыйтнине шута хурса вылăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветеринари врачĕпе Геннадий СПАСКИНПА калаçрăм.**

**– Геннадий Николаевич, ĕне çилли япăхнин сăлтавĕ мĕнре-ха?**

– Ĕнене тĕрĕс пăхасси, вăл шутра çилле таса тытасси – питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсен шутĕнче. Çакă сăвăм шайне тата вылăх сывлăхне сыхласа хăварассипе çыхăннă. Улăх-çаранта çӳрекен ĕнен çилли çинче пĕчĕк-пĕчĕк сурансем тухаççĕ, тĕрлĕ кăпшанкă çыртать, çилĕ çилпе çуркаланать. Тепĕр чухне санитарипе гигиена ĕçĕсене йĕркеллĕ туса пыманни курăнать. Çаксем йăлтах ĕне çилли япăхнин сăлтавĕсем пулаççĕ.

Çилĕ япăхнине асăрхасан та хăшĕ-пĕри сиплев пирки тӳрех шухăшламасть. Çавна май çилĕ фурункулезĕ, пӳрлĕ мастит, флегмон чирĕсем пуçланаççĕ. Чылай чухне çак чирсем сĕт пачах та тухманни тата ĕнене аша ярасси патне те илсе çитереççĕ.

**– Апла пулсан пĕр тăхтаса тăмасăр тухтăр патне чупмалла.**

– Паллах, çӳлерех асăннă чирсене асăрхасанах пĕр тăхтамасăр пирĕн ветеринари специалисчĕпе çыхăнмалла. Вăл чире палăртса сиплев сĕнет. Енчен те ĕне çилли çинче часах юсанман суран вырăнĕсем пулсан, чире шалалла ярас мар тесе, бактерие хирĕç кĕрешекен препаратсемпе сĕрмелли ытти эмелпе усă курмалла.

Сиплев вăхăтĕнче ĕнене кĕтĕве ямасăр килте тытсан лайăхрах. Сарайсемпе инвентарьсене дезинфекцилемелле, унсăрăн чир-чĕр унтах юлма пултарать. Вылăх апачĕ пахалăхлă пулмалла. Сарайне усăлтармалла, айсарăмне улăштарса тăмалла. Çак йĕркесене пăхăнманни сиплеве вăрахлатма пултарать. Паха апат, сарайри тасалăх – çирĕп иммунитет никĕсĕ.

**– Тен, лару-тăру кăткăсланнă вăхăтра пулĕ, ветеринари аптекинче препаратсем çитменнине илтме пулать. Ку енĕпе мĕн каланă пулăттăр?**

– Ветеринари аптекинче те, паллах, вăл е ку препарат çукки, тĕрĕсрех каласан, кӳрсе килнĕ препарата сутса пĕтернĕ вăхăт пулма пултарать. Уншăн пăшăрханмалла мар. Кирлĕ пулсан эпир хамăр енчен те саккас паратпăр, вырăнти ветеринарсемпе çыхăнмалла кăна. Çак кунсенче, тĕслĕхрен, цинк маçне кӳрсе килчĕç.

**– Паллах, тасалăх пур çĕрте те кирлĕ. Ĕне сумалли йĕркене тепĕр хут аса илтерни ытлашши пулмĕ.**

– Сума ларичченех ĕне çиллине таса татăкпа çумалла. Тата ăна кашни кун улăштармалла тата вĕретмелле. Унсăрăн вĕсенче чир-чĕр сыхланса юлать кăна мар, ĕрчесе те пырать. Ĕне çиллине çеç мар, ун тавралла та çумалла. Сĕт витри яланах таса пулмалла.

Сĕтĕн малтанхи тумламĕсене уйрăм стакана анализ тума суса илмелле. Анализ тăрăх субклиника мастичĕ тата юнлă катăксем пуррине пĕлме пулать. Анализа та вăхăтран вăхăта туса тăмалла. Çакă чире вăхăтра тупма тата сиплеве те вăхăтра пуçлама май парать.

Ĕне суса пĕтернипе кăна ĕç пĕтмест. Çак йĕркене те пăхăнмаллах: çилле тĕрлĕ чирчĕр ан лектĕр тесен чĕччисене нӳрĕ татăкпа сăтăрса илмелле те ăшă шывпа çумалла, кайран ĕне сунă хыççăн сĕрмелли ятарлă препаратпа усă курмалла.

**– Унсăр пуçне вылăх хуртĕнчен те вăхăтра хăтăлмалла пулĕ?**

– Çулсерен кĕркунне тата çуркунне вылăх-чĕрлĕхĕн дегельминтизацине профилактика тĕлĕшпе туса ирттермелле. Ăна организма паразитсенчен тасатма тата вĕсем малалла куçассине чарма тумалла.

**– Вылăх-чĕрлĕхе вăл е ку тăрăхран кӳрсе килмелле пулсан?**

– Ку ĕçе ветеринари документĕсем пур пулсан кăна тума юрать. Тепĕр майлă каласан, сутмалли-туянмалли вылăхпа пĕрле сопроводительнăй документ пулмалла. Ăна Раççей Ял хуçалăх министерствин 2015 çулхи 635 номерлĕ хушăвĕпе çирĕплетнĕ ветеринари правилисене тĕпе хурса çыраççĕ. Унта вылăх хăш регионтан пулнине, кӳрсе каясси енĕпе чикĕлев пурри-çуккине палăртаççĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, вылăх-чĕрлĕх усракан çыннăн ветеринари специалисчĕпе тачă çыхăнура пулмалла, кирлĕ пулсан пулăшу вăхăтра ыйтмалла, тухтăр сĕнĕвне шута илмелле.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Полици хроникинчен

# Ӳсĕрле руль умне ларакан чакмасть

Ялта пурнăç лайăхланса пыни урамра темĕн тĕрлĕ транспорт хатĕрĕ курма пулнинчен те курăнать. Ялсенче халĕ ав квадроциклпа тусан вĕçтерекенсем те çук мар. Муркашра пурăнакан пĕр арçын вара ку транспорт хатĕрĕпе ӳсĕрле çӳреме юрать тесе шутланă пулас. Ӳсĕрле çул çине тухнăскере, йĕркене пăснăшăн, паллах, çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем тытса чарнă.

Трактор вара – ялта хăнăхнă транспорт хатĕрĕ. Унпа та ӳсĕрле çӳреме юратакан çук мар. Карамалькассинче шăпах çакăн пек водителе тытса чарнă: вăл ӳсĕр пулнă тата транспорт хатĕрĕпе çӳреме ирĕк паракан удостоверни те пулман хăйĕн.

Административлă йĕркене пăсни ахаль иртмĕ – кодексра çырса çирĕплетнĕ наказание пурнăçлама тивет.

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш район пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Юн çăралнине мĕнле пĕлмелле?

Çăра юн – чĕрепе юн тымарĕсен системин тата ытти чирсене систерекенĕ. Организмра лару-тăру йĕркеллĕ маррине, мĕн çине тимлĕх уйăрмаллине мĕнле пĕлмелле-ха? Кун пирки материал **онкологăн тата хирургăн Иван Карасевăн Telegram-каналĕнче** пичетленнĕ.

Чи анлă сарăлнă лару-тăруран пĕри: организмра шыв çителĕксĕррипе юн çăра пулма пултарать. Çавна пула иммунитет чакать, мĕншĕн тесен организмра тасатмалли ресурссем çитмеççĕ. Кунпа пĕрлех çăра ват йĕркеленет. Вăл вара чулланса ларас хăрушлăхпа çыхăннă.

«Енчен те эсир хăвăр çиес килнине е «çăвара мĕн те пулин хыпас килнине» туятăр пулсан, ку вăл организмра шыв çитменни пирки пĕлтерекен сигнал пулса тăрать», – асăннă материалта.

Кун пек чухне шыв ĕçес пулать. Ытларахăшĕ пек çиме тытăнмалла мар. Виççĕмĕш хутĕнче кăна, хăвăра татах та выçă туятăр пулсан, çиме юрать. Ку – чăннипех те хырăм выçнин туйăмĕ.

Хăрушă чир-чĕртен асăрханас тетĕр пулсан, кашни ирех пĕр стакан шыв ĕçессине кун йĕркине кĕртес пулать. Ăшă шыв пулсан лайăхрах.

Кулленхи норма вара – йывăрăшăн пĕр килограмĕ пуçне вăтамран 30 – 40 мл шыв. Эсир шыв ĕçме хăнăхман пулсан, сахалраххан пуçлăр, ерипен çав нормăна çитерĕр.

Маларах чĕрепе юн тымарĕсен системин хирургĕ Виктор Балдин юн çаврăнăшĕ пăсăлнине мĕнле майпа пĕлме май пурри пирки ăнлантарса панă. Пĕрне вĕçĕсем тĕнме тытăнаççĕ е тирсе ыратаççĕ, алă-ура ÿчĕн тĕсĕ улшăнать, алă тата ура тупанĕсем сивĕ пулни палăрать.

**Оксана ГРИБАНОВА.**

# Болгари пăрăçĕ пулăшать

«Япăх» тата «лайăх» холестерин проблеми чылайăшне канăç памасть. Ученăйсем çирĕплетеççĕ: çу евĕр япала ытлашши пулнипе вăл артерисен шалти стенки çинче пухăнма тытăнать, муклашкасем йĕркеленеççĕ. Çав сăлтава пула инсульт, инфаркт тата ытти йывăр чир те аталанма пултарать. **Япони диетолог врачĕн Масахиро Ивасакин** шухăшĕпе вара профилактика – ку чир-чĕртен асăрханмалли чи лайăх мел. Вăл «япăх» холестерин шайне чакармалли хăйĕн мелне сĕнет.

Таблеткăсем вырăнне, чир йывăр иртнĕ чухне вара врач çырса панă таблеткăсемпе пĕрле те рациона болгари пăрăçĕ кĕртмелли пирки калать. Кун пирки вăл «Овощи – лучшая инвестиция» кĕнекере çырса кăтартнă.

**Болгари хĕрлĕ пăрăçĕ мĕнпе усăллă-ха?**

Медицина енĕпе тĕпчевсем ирттерекен врач çавна палăртнă: асăннă пахча çимĕçре антиоксидант çыхăнăвĕ нумай. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшли капсантин (капсаицинпа ан пăтраштарăр!) пулса тăрать. Фитохими япали (ученăйсем унăн майĕсем бета-каротинран 1,5 хут ытларах тесе çирĕплетеççĕ) çимĕç тĕсĕшĕн тата усăллă енĕсемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. «Япăх» холестеринпа кĕрешессипе пысăк вырăн йышăнать.

Самăрланасси енне сулăннă çынсен диетишĕн болгари пăрăçĕ эффективлă пулса тăрать. Ку çимĕçе уйрăмах вăйхал активлăхĕ сахаллипе пĕрлех «япăх» холестерин шайĕ пысăккисен çиме тăрăшмалла. Лабораторире шăшисем çинче ирттернĕ тĕпчевсем кăтартса панă тăрăх, çуллă çимĕçе капсантин хушсан шăшисем, капсантин хушманнисемпе танлаштарсан, сахалрах ÿт хушнă.

# Ватлăх çитрĕ тесе лармалла мар

ДЕМОГРАФИЯ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

***Аслă ÿсĕмри çынсен диспансеризаци тĕрĕслевĕнче уйрăм пунктсем те сахал мар. Çакă çул кайнăçемĕн организмра пулса иртекен улшăнусемпе, вĕсем мĕнле иртнине пĕлессипе çыхăннă.***

***Чăваш Енре «Демографи» наци проекчĕ шайĕнче «Аслă ăру» проекта пурнăçласа пыраççĕ. Аслă ăру çыннисене сывлăха упрама пулăшассипе тата вĕсен пурнăç шайне ÿстерессипе лару-тăру еплерех-ха паян? Кун пирки Чăваш Ен Сывлăх сыхлав министерствин штатра тăман специалисчĕ, Вăрçă ветеранĕсен республика клиника госпиталĕн гериатр врачĕ Нина СИДОРОВА каласа панă.***

**– Аслă ÿсĕмри активлăх мĕнпе çыхăннă? Çакна тĕрĕс мĕнле ăнланмалла?**

– Çакă вăл – аслă ÿсĕмри çын юнашар çынсен пулăшăвĕсĕрех пурăнма пултарни. Паллă ĕнтĕ, кашни çыннăн вăрăм пурнăçпа, çав вăхăтрах никама та пăхăнмасăр пурăнас килет. Çавăнпа та «Демографи» нацпроект тĕллевĕсенчен пĕри паян çакна валли условисем тăвассипе çыхăннă. Çавна май халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центрсем, сывлăх сыхлав учрежденийĕсем, ĕçпе тивĕçтерекен центрсем тата ытти организацисем ĕçлеççĕ те ĕнтĕ. «Аслă ăру» федераци проекчĕ пуррипе аслă ăру çыннисене эмелпе тивĕçтерес, чирсене асăрхаттарма тата диспансеризаци тĕрĕслевне ирттерме пулăшас ĕçе уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Кунпа пĕрлех – аслă ăру çыннисен уйрăмлăхĕсене шута илекен гериатри пулăшăвне парассипе те.

**– Аслă ăру çыннисем хăшĕ-пĕри социаллă пурнăçа хастар хутшăннине куратпăр. Çакăн ырă витĕмĕ те пурах пулĕ.**

– Медицина тĕлĕшĕнчен пăхас пулсан социаллă пурнăçа активлă хутшăнни тата хусканусем туни аслă ăру çыннисен пулма пултаракан чылай чирне, организмри пулăмне асăрхаттарма пулăшать.

Пурнăçра мĕнле-ха? Ватă çын активлă мар пулсан унăн чирĕсем активлăрах пулма тытăнаççĕ, пухăнса пыраççĕ. Сăмахран, çын пуç çаврăнни пирки калать, анчах хăй усăлса çÿреме тухмасть – паллах пуç çаврăнни иртсе каймасть. Ватă çыннăн ÿкесрен асăрханмалла тесен хăшĕсем пачах та пÿртрен тухмаççĕ, хускану сахал тăваççĕ. Çапла тĕртĕмсем те хавшаççĕ, кĕлетке виçи те пысăкланса пырать. Кун пек чухне урана йывăр килет.

Çавăнпа та хускану тумаллах, анчах çул ÿсĕмне кура, мĕнле чирсем пуррине, унччен мĕнле пурнăçа хăнăхнине кура тумалла.

**– 65 çултан аслăраххисен диспансеризацийĕ мĕнпе уйрăлса тăрать?**

– Ĕçлекенсен çул ÿсĕмĕнчен аслăрахисем валли диспансеризаци вăхăтĕнче хуравлмалли ыйтусене шăпах ватлăх паллисене тупса палăртма кĕртнĕ. Сăмахран, юлашки çур çулта çын ÿкнĕ пулнă, анчах та ăна куç курманни ытларах пăшăрхантарнине, канăçсăрлантарнине пула вăл çак пулăма кирлĕ пек тимлĕх уйăрман. Çав вăхăтрах вара çын ÿкнине те тĕплĕ тишкермелле.

65 çултан аслăраххисене диспансеризаци вăхăтĕнче тĕрлĕ ыйту çине хуравлаттарни вара çыннăн хальхи аталанман, анчах та çитес вăхăтра аталанма пултаракан енсем пирки пĕлме май парать. Çапла май врач аслă ÿсĕмри пациента кирлĕ специалист патне направлени парать. Специалистсем вара тĕрлĕ пăтăрмах кÿме пултаракан пулăмсене асăрхаттарма пулăшĕç.

**– Гериатри пулăшăвĕ тÿлевсĕрех-и?**

– Паллах, ку пулăшупа медицина страхлав полисĕпе пăхса хунă тăрăх тивĕçтереççĕ. Консультаци вырăнти поликлиникăра гериатр врач пулсан унтах ирттереççĕ е Республика гериатри центрне направлени пареççĕ.



Гериатр патĕнче пациента тĕплĕ тĕрĕслеççĕ, мĕншĕн тесен кун пек пациентсен ытларах чухне пĕр чир кăна мар.

**– Аслă ăру çыннисене ватлăха та ырă сывлăхпа кĕтсе илме, вăрăм пурнăçпа активлă пурăнма мĕн чăрмантарать? Çакăнпа çыхăннă ыйтусене патшалăх енчен мĕнле тимлĕх уйăраççĕ?**

– Гериатр вăл – ытти специалистсемпе тата службăсемпе çыхăнса ĕçлекен врач. Вăл пациента сиплевпе кăна мар, психологи пулăшăвĕпе те тивĕçтерет.

Хальхи вăхăтра патшалăх çыннăн пурнăçне çул ÿсĕмĕсем çине пăйланине хирĕç кĕрешет. Нумай чух «эсир вара мĕн шутланă? Каçарăр та, сирĕн çулта кун пекки пулать» тенине илтетпĕр. Ватлăх вăл çулсене ахаль çеç пурăнса ирттерни кăна пулмалла мар. Çакна çыннăн чи малтанах хăйĕн ăнланмалла, обществăлла шухăша та улăштарса пымалла. Çакна тума пире «Кĕмĕл волонтер», «Ĕçлĕ пулма пулăшасси» проектсем пулăшаççĕ. Канупа культура центрĕсенче аслă ÿсĕмри çынсене пушă вăхăта усăллă ирттерме майсем туса параççĕ. Социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центрсем те тĕрлĕ вĕренÿ курсĕсене явăçтараççĕ.

Сывлăх сыхлавĕнче те майсем хушăнсах пыраççĕ. Хальхи вăхăтра чылай операцие çул ÿсĕмне пăхмасăрах туса ирттереççĕ. Гериатр врачсем вара хăйсен ĕçĕн уйрăмлăхĕсене кура ватă çыннăн мĕнле чир пур, ватă çынна мĕн канăçсăрлантарать – пĕтĕмпех сиплеме тăрăшаççĕ.

Çын вара хăйне «мĕн тăвăнха, ватлăх ĕнтĕ ку» тесе лăплантарать пулсан, чир-чĕрĕ те аталансах пырать. Малтан унăн пуç ыратать е пуç çаврăнать, сыпăсем ыратма тытăнаççĕ, активлăх чакать тата депресси пуçланать, çын хăйне тимлĕх уйăрма та пăрахать.

Сиплев е врач сĕнÿ-канашĕ кирлĕ чухне яланах больницăна каймалла. Паллах ватă çынна унăн çамрăклăхне тавăрса пама çук, анчах хăш-пĕр чир паллисене асăрхаса сиплеме май пур. Ку вара малалла пурăнма хавхалантарать, вăй парать.

**– Ватă çыннăн пурнăçа лайăх енне улăштарас тесен мĕнрен пуçламалла?**

– Чи малтанах чуна, ÿт-пĕве киленĕç кÿрекен тата мимене ĕçлетерекен ĕçпе аппаланма тытăнмалла. Чун валли пĕр-пĕрипе калаçни тата социаллă активлă пулни кирлĕ, ÿт-пÿ валли – хусканусем туни. Вăхăт кайнăçемĕн тĕртĕмсем хавшаççĕ, çурăм шăмми те кукăрălма тытăнать, ытларах телевизор умĕнче ларас е выртас килет, çавăнпа ватăсен ытлашши нисăта утса çÿремеççĕ. Çакă вара тĕрĕс мар. Миме валли кроссвордсем тупмалла, сăвă вĕренни те усăллă, вуламалла.

Пирус туртма, эрех ĕçме пăрахмалла. Вĕсем канăçа лăпкăлăх памаççĕ. Пылак, тĕтĕмленĕ е ытла тăварлă апат-çимĕç çимелле мар. Çакăншăн организм тав сăмахĕ калать кăна.

Врач патĕнче тăтăшах тĕрĕсленмелле, вăраха кайнă чирсене çивĕчленме памалла мар.

# Инсульта асăрхаттарма

Пуç мимин инсульчĕ пулас хăрушлăх çул кайнăçемĕн ÿсет. Çын мĕн чухлĕ аслăрах, чирлеме пултарасси те çавăн чухлĕ ытларах. Шел пулин те, юлашки вăхăтра асăннă чир пĕтĕм тĕнчипех «çамрăкланма» тытăнни палăрать.

Инсульт тесе пуç миминчи юн çаврăнăшĕпе çыхăннă проблемăна калаççĕ. Сăлтавĕ спазм, миме тымарĕ çурăлса кайни е питĕрĕнсе ларни пулма пултарать. Çавна пула мимен пĕр пайĕ юн кирлĕ чухлĕ илсе тăраймасть. Темиçе минут хушши кислород тата тутлăхлă япаласем илсе тăраймасан вара миме тĕртĕмĕсем вилеççĕ. Кун пекки мимен хăш пайĕнче пулса иртнине кура миме инсульчĕ тĕрлĕ пăтăрмах патне илсе çитерме пултарать: хăшĕ-пĕри калаçайми пулать, теприне шалкăм çапать, çын вилме те пултарать.

Япăххи – инсульт пулассине сисме йывăр. Çавăнпа та, çак йывăр чир сире ан çулăхтăр тесен, вăл аталанма пултарассине асăрхаттарма тăрăшмалла. Ку тĕлĕшпе чи эффективли – пурнăç йĕркине пĕтĕмĕшпех çĕнĕрен пăхса тухса йĕркелесси. Чи малтанах çакă вăл:

**– сиенлĕ йăласенчен хăпмалла.** Никотин нерв системине пăлхантарать, чĕре çине нагрузка парать, юн тымарĕсене пĕрĕнтерет, артери юн пусăмне ÿстерет;

**– ытлашши йывăрăшран хăпас пулать.** Ытлашши йывăрăш инсульт пулма пултарассипе тÿрремĕнех çыхăннă. Çакă вăл – артери юн пусăмĕ пысăкки те, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем те, диабет аталанасси те;

**– юнри холестерин шайне виçере тытмалла.** Инсульт ытларах чухне пуç миминчи артерисен анлăшĕ пĕчĕкленнипе çыхăннă. Юна йĕркеллĕ куçма юн тымарĕсен стенки çинче пухăнакан холестерин муклашкисем чăрмантараççĕ. Чире асăрхаттарас тесен, сывă апатлану правилисене пăхăнмалла;

**– юнри глюкоза кирлĕ шайра пулмалла.** Сахăр диабечĕпе чирлекенсен нумай чухне ытлашши йывăрăш пурри тата юн тымарĕсен стенкисем хавшак пулни палăрать. Çавăнпа та хăвăрт углеводсемлĕ çимĕç çиессинчен тытăнса тăмалла, юнри глюкоза шайне тĕрĕслесе тăмалла;

**– сывă апатлану правилисене пăхăнмалла. Апатланура ытларах пахча çимĕç тата улма-çырла пулмалла.** Ÿсен-тăран çимĕçĕ артери юн пусăмне чакарать тата юн тымарĕсене пиçĕрех тăвать;

**– çимĕçпе пĕрле тăвар çиессине чакармалла.** Кунне вăл 5 грамран (1 чей кашăкĕ) ытла пулмалла мар. Тăвар ытлашши çини организмра шĕвек ытларах тытăнса юласси патне илсе пырать, артери юн пусăмĕ ÿсет;

**– вăй-хал активлăхне ÿстермелле.** Утни, чупни, шывра ишни, ташлани уйрăмах аван;

**– ĕçри тата йăлари стресс лару-тăрăвне хирĕç тăма пĕлмелле.** Стресс вăхăтĕнче юна адреналин нумай каять. Чĕре активлăрах ĕçлеме тытăнать, артери юн пусăмĕ ÿсет, çакă инсульт патне çитерме пултарать;

**– ĕç тата кану режимне пăхăнмалла.** Кулленхи ĕç-пуçа туса ĕлкĕрмелле кăна мар, çавăн пекех 7 – 8 сехетрен кая мар çывăрма та вăхăт хăвармалла;

**– медицина тĕрĕслевĕсенче вăхăтра пулмалла, артери юн пусăмне тĕрĕслесе тăмалла.** Çакă проблемăна вăхăтра тупса палăртма тата вăхăтра сиплеме пуçлама пулăшĕ;

**– врач çырса панă эмелсене йышăнмалла.** Артери гипертонийĕнчен ăнăçлă сипленесси врачран тата эмелсенчен кăна мар, çавăн пекех харпăр хăйĕн сывлăхĕ тĕлĕшпе яваплă пулнинчен те килет. Çавăнпа та врач сĕнĕвĕсене çирĕп пурнăçлăр.

Астăвăр! Пуç миминчи юн çаврăнăшĕ пăсăлни тепĕр хут та пулма пултарать. Сывă пурнăç йĕркин ансат правилисене пăхăнни инсульта чиперех асăрхаттарма тата хăвăрăн сывлăха сыхласа хăварма пулăшĕ.

**Антонина ТАБАРДАК,**
**общество сывлăхĕпе медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

Сĕнӳ-канаш

# Вăрлăх хатĕрлесси

Калăпăр, сирĕн кăçал килтех йăран çинче паха йышши хăяр та, помидор та ӳсеççĕ. Çитес çул та эсир çав сортсенех лартас тетĕр, анчах ун йышши вăрлăх ниçта та çук. Тимлĕ пахчаçă хăй хатĕрлеме тăрăшать юрăхлă вăрлăха.

Ана çинче чи малтан хĕрелсе çитнĕ помидорсенчен чи лайăххисене, шултрисене суйлăр. Вĕсем çумне, ыттисем хушшинче çухалса каясран, çип е лента çыхса паллă тăвăр. Ытлашши туратсемпе тĕп тунан тăррине иртсе тăкмалла. Ку хăвăра кирлĕ помидора вăйланма пулăшать. Помидор тĕксĕм пулса хĕрелсе çитрĕ пулсан, татса илĕр. Пиçсе çитме помидора татах пĕр-икĕ эрне выртнармалла. Çакнашкал меслетпе хатĕрленĕ помидорăн вăрри хăвăрт шăтса тухать. Ытлашши нумай выртнă помидорăн вăрри аксан час шăтса тухаймасть.

Икĕ эрне иртнĕ хыççăн, чей кашăкĕн аврипе çурса, пиçсе çитнĕ помидорăн варрине кăларса илĕр те кантăк банкăна икĕ кунлăха ярса лартăр. Пӳлĕмри температура çирĕм – çирĕм икĕ градус ăшă пултăр. Çăра хутăш çӳле хăпарса çитсен, вăрра тăрă шывра чӳхесе тасатнă хыççăн хут, фанера е ывăс çине типме сарса хурăр. Пĕр килограмм помидор пуçне виçĕ-тăватă грамм вăрă тухать (е пине яхăн). Вăрă типĕтмелли пӳлĕмре сакăр-вунă градус ăшă кирлĕ. Çакнашкал майпа хатĕрленĕ вăрă пилĕк-çичĕ çул иртсен те акма юрăхлă. Томат хайне-хай шăркалантаракан ӳсен-тăран пулнă пирки, акма вăхăт çитсен, сортпа сорт уйăрса лартни кирлех мар.

Хăяр пирки ун пек калаймăн. Юнашар акнă тĕрлĕрен хăяр сорчĕсем шăркаланнă вăхăтра пăтрашăнса кайма пултараççĕ. Çавăнпа та чылай чухне хăярăн пĕр сортне кăна акаççĕ. Тĕрлĕрен сортсене пĕр-пĕринчен пилĕк метртан сыăха акмалла мар.

Вăрлăх туса илме чи пирвай чăмăртаннă хăяра илеççĕ. Пилĕк-ултă çулçă кăларнă хыççăн тĕп туна тăррине татса пăрахаççĕ. Хăярĕ тĕп турат çинчи тата айккинчи туратсен иккĕмĕшпе виççĕмĕш çулçи тĕлĕнчен тухса чăмăртанни усăллăрах. Вăрлăх валли турат çинче ик-виç хăяр кăна хăварса, ыттисене пурне те иртсе пăрахмалла.

Вăрлăх хăяр ӳссен, ăна саралса çитме татах вăтăр пилĕк -хĕрĕх кун хушши ана çинчех хăварни кирлĕ. Татса илнĕ хыççăн, вăрă пулса çиттĕр тесе, чӳрече умĕнче вунă – вунпилĕк кун хушши тытса усрамалла. Çакăн хыççăн вăрра кăларса илме те юрать. Кантăк банкăра е эмаль тирĕкре пӳлĕмри температурăра виçĕ-тăватă кун хушши усранă хыççăн вăрра çуса тасатмалла. Хăяр вăррине те, помидорăнни пекех, типĕтсе хумалла. Пĕр хăяртан тăватă - вунă грамм е виççĕре яхăн вăрă тухать. Типĕ пӳлĕмре (вун пилĕк градус ăшă чухне) вăрă сакăр – вунă çула яхăн усранать.

# Наушникпа тĕрĕс усă курăр

Урамра эпир халĕ çынсем наушникпа утнине курма хăнăхрăмăр. Анчах та вĕçĕм наушникпа çӳрени малашне хăлха мĕнле илтесси çинче те палăрма пултарать.

Кирек епле сасăн та янăравлăх виçи пур. Ăна децибелпа (дБ) виçеççĕ. Палăртнă тăрăх, çын хăлхи сасса чи пĕчĕкки 10 – 15 дБ илтме пултарать. Танлаштарма: шăппăн каланă чухне сасă янăравлăхĕ 20 – 24 дБ танлашать, кăшкăрнă чухне – 60 – 65 дБ. Кун пекки хăлхашăн меллех мар. Çав вăхăтрах 80 дБ шăв-шава эпир ниĕмпле сиенсĕрех йышăнатпăр. Сасă вăйĕ 90 дБ ытларах чухне вара çакă чăннипех те хăрушă пулса тăрать.

Наушниксенче чи пысăк янăравлăх чухне сасă шайĕ 110 – 130 дБ танлашать. Енчен те эсир кунсерен темиçе сехет наушникпа вăйлă сасăпа (80 дБ ытла) юрă итлетĕр пулсан, хăрушлăхпа çыхăннă ушкăна лекетĕр. Мĕншĕн тесен наушникпа çакăн пек режимпа усă курнипе сасă сенсор клеткисем самай сиенленеççĕ тата нейросенсорлă хăлхасăрлăх аталанма пуçлать. Çавăнпа та юрă наушникпа пĕр чарăнмасăр 2 сехетрен ытла е кунне 2 – 3 сехетрен ытла нихăçан та ан итлĕр. Хăлха лайăх илтессишĕн уйрăмах наушникпа транспорт хатĕрĕ çинче усă курни сиенлĕ. Усă куратăрах пулсан вара сасса май пур таран пĕчĕклетме тăрăшăр.

Кунпа пĕрлех телефон тата наушник çул çинче хушма хăрушлăх кăларса тăратма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен sms-хыпар тата e-mail-уведомлени ярасси çул çинче тимлĕхе çухатассипе çыхăннă. Çул урлă каçнă тата велосипедпа ярăннă чухне кĕсье телефонĕпе калаçни пурнăçпа сывлăхшăн чăннипех те хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Наушникпа юрă итленĕ е телефонпа калаçнă чухне çын çывхаракан автомашинăна вăхăтра асăрхама пултараймасть.

Тимлĕ пулăр тата хăвăра сыхлăр!

**Э. ВОЛКОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центр лабораторийĕн эксперт физикĕ.**

# Улма-çырлапа пахча çимĕçе мĕнле суйламалла?

Çыннăн апат рационĕнче пахча çимĕç тата улма-çырла уйрăм вырăн йышăнаççĕ. Кун пек çимĕç витаминсен, минерал япалисен, органика кислотисен, пектин япалисен тĕп çăл куçĕ пулса тăрать. Вĕсем организма питĕ кирлĕ. Çак çимĕçсенчи макро- тата микрояпаласем кашниншĕнех пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.

Хăвăр туянакан пахча çимĕç тата улма-çырла пахалăхлă та усăллă пултăр тесен, ансат правилăсене пăхăнас пулать:

– пахча çимĕçе, улма-çырлана, бахча культурисене ятарлă суту-илӳ вырăнĕсенче кăна туянăр: ял хуçалăх пасарĕсенче, магазинсенче, павильонсенче. Кун пек çĕрте çимĕçсене санитарипе ветеринари лабораторийĕнче тĕрĕслеççĕ, вĕсем сывлăхшăн хăрушă пулса тăмаççĕ;

– çимĕçсене санкцилемен суту-илӳ вырăнĕсенче, трасса хĕрринче тата ытти çĕрте туянмалла мар. Унта туяннă çимĕçпе сывлăха сиен кӳме, инфекци чирĕсемпе чирлеме те пулать;

– çимĕç туяннă чухне суту-илӳ точки санитарипе техника тата гигиена нормисене мĕнле тивĕçтернине пăхăр. Персонал харпăр хăйĕн гигиена нормисене пăхăнать-и?

Пахча çимĕç тата улма-çырла туянса хăвăра тата хăвăрăн çывăх çынсене пестицидсемпе тата ытти хими япалисемпе наркăмăшлантарассинчен асăрханас тетĕр пулсан, çимĕç туяннă чухне çак правилăсем пирки манмалла мар:

– туянакан çимĕç хăйне уйрăм шăршăллă пулмалла. Енчен те шăршă çук пулсан, эсир суйлакан çимĕç, епле хитре пулин те, çакă çимĕç пахалăхĕн шайĕ пĕчĕккине, ăна усрамалли специфика мелĕсемпе усă курнине систерет;

– ялтăркка çутă, пысăк тата яка пахча çимĕçпе улма-çырла суйламалла мар. Поставщик пирки шанчăк çук пулсан, кун пек çимĕçе сывлăш яман упаковкăрине туянма тăхтас пулать. Шăпах кун пек çимĕçре нитратсемпе ытти сиенлĕ япаласем пулма пултараççĕ;

– аманнă, кăвакарма тытăннă, çĕрнин палли пур улма-çырла тата пахча çимĕç ан туянăр;

– сутакан çимĕç пирки сутуçăран информаци тата документсем ыйтма ан именĕр. Çавăн пекех эсир çимĕçе ăçта çитĕнтернипе тата управ срокĕсемпе интересленме пултаратăр. Киле çитсен туяннă çимĕçе тĕплĕ хатĕрлеме, çуса тасатма ан манăр. Пахча çимĕçе тата улма-çырлана çума йăла хатĕрĕсемпе тата супăньпе усă курма юрамасть. Мĕншĕн тесен вĕсем пестицидсемпе тата гербицидсемпе пĕрлешсе тата хăрушăрах япала йĕркелеме пултараççĕ.



Хăвăра упрăр тата нумай çул сывă пулăр!

**Е. МОИСЕЕВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн апатлану гигиенин врачĕ.**

# Вĕрипе аптăраса ӳкес мар тесен

Çын вăрах вăхăт пысăк температурăра пулнă чухне вĕрипе аптăраса ӳкес хăрушлăх çук мар. Çакă вăйлă дегидратаци, органсем сиенленесси е çын вилесси патне те çитерме пултарать. Вĕрипе аптăраса ӳкес мар тесен, çак сĕнӳсене пăхăнни ытлашши пулмĕ.

1. Шыв çителĕклĕ ĕçĕр. Шăрăх çанталăкра тар тухнипе организм нӳрĕк хăвăрт çухатать. Çавăнпа та кун пек чухне шыв ытти чухнехинчен ытларах ĕçме тăрăшас пулать. Усăлтаракан напитоксем, вăл шутра шыв тата спорт напиткĕсем ĕçĕр. Çакă çухатнă электролитсене саплаштарма май парĕ.

2. Талăкăн чи шăрăх вăхăтĕнче активлă вăй-хал ĕçĕ ан пурнăçлăр. Енчен те спорт занятийĕ ирттермелле е вăй-хал ĕçĕ пурнăçламалла пулсан, ăна температура пĕчĕкрех чухне ирхине е каçалапа тăвăр.

3. Çăмăл та ирĕклĕ тумланăр. Натураллă материалтан çĕленĕ тумтир пулсан лайăх: çĕр мамăкран е йĕтĕнрен. Вĕсем ӳте сывлама май параççĕ тата тара хăйсем çине туртса илеççĕ.

4. Усă хĕвел айĕнче нумай пулмалла мар. Урама тухма тивет пулсан, сунчăкпа усă курăр, шĕлепке тăхăнăр, хĕвелтен сыхланмалли крем сĕрĕр.

5. Ӳт-пĕве тăтăш усăлтарăр. Усăлтаракан душ йышăнăр е пит-куçа тата алăсене çăвăр. Çавăн пекех ӳт-пĕве усăлтарма вентиляторпа е нӳрĕ алшăллипе те усă курма юрать.

6. Хăвăра мĕнле туйнине асăрхаса тăрăр. Пуç çаврăннине, вăй чакнине, ăш пăтраннине туятăр пулсан, пĕр тăхтаса тăмасăр сулхăн вырăн тупăр, шыв ĕçĕр. Симптомсем иртмеççĕ пулсан, медицина пулăшăвĕ кирлĕ пулать.

7. Хăрушлăх ушкăнне кĕрекен çынсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулма тивет. Ачасем, ватă çынсем, вăраха пыракан чирсемпе чирлекенсем хушшинче вĕрипе аптăраса ӳкме пултаракансем ытларах. Вĕсем сулхăн тата хăрушлăхсăр вырăнта пулччăр, хăйсене мĕнле туйнине пĕлсе тăрăр.

Асăннă сĕнӳсене пăхăнни вĕрипе аптăраса ӳкесрен чиперех асăрханма, шăрăх çанталăкра хăвăрăн сывлăха сыхласа хăварма май парĕ. Хăвăрăнне е ыттисенне вĕрипе аптăраса ӳкнин паллисене асăрхатăр пулсан, çийĕнчех медицина пулăшăвĕпе усă курăр.

**Д. САМИТОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн пĕтĕмĕшле гигиена врачĕ.**

# Çĕр улми çеçки çинчи «çырла»

Пурте асăрханă ĕнтĕ, çĕр улми кăларса пухма вăхăт çитеспе çеçкĕ çинче темĕнле «çимĕç» ӳсме пуçăнать. Кам ăна çырла тет, теприсем пĕчĕк помидор теççĕ. Мĕн-ха вара ку тĕрĕссипе? Вĕсем мĕн тума çитĕнеççĕ? Ку çимĕçпе мĕн тумалла: татмалла е çук? Унпа усăллă усă курма пулать-и?

**Çеçкĕ çинче мĕнле çырла?**

Паллă ĕнтĕ, çĕр улми çимĕçĕпе те, çавăн пекех вăрăран та ĕрчеме пултарать. Тымар çимĕçĕн вăрри ăçта пулать-ха? Тĕрĕс, шăпах ĕнтĕ çав çырла-помидорта. Кашни çак çимĕçре 100 – 200 таран вăрă пулать.

**Çĕр улми çырлипе мĕн тумалла?**

Чи тĕрĕс йышăну – татса пăрахмалла. Мĕншĕн тесен çак вăрăсене ӳстерме сахал мар вăй тата тутлăхлă япала расхутланать. Паллă ĕнтĕ, эсир çĕр улмин лайăх тухăçне илес тетĕр пулсан.

Енчен те вара çĕр улми вăррине туса илес шухăшлă, кайран ăна лартма усă курасшăн пулсан, асăннă çимĕçе çапах татас пулать. Анчах та пăрахма кирлĕ мар, пиçсе çитме пуçтарса хумалла, кайран вара вăрлăх материал вырăнне усă курмалла.

# Иккĕмĕш тапхăр

Хăш-пĕр йăрана часах пушатăпăр. Унта вара ешĕл çимĕçе иккĕмĕш хут та лартма пулать. Çакăн пирки **Михаил Краснов биолог** «Вечерняя Москва» издание каласа кăтартать.

Пушаннă йăрана кантарма та пулать, сидерат аксан йăран канать, çавăн пекех хăш-пĕр культура валли те юрăхлă вăл. Хĕрлĕ кăшман аксан кĕркуннеччен çулçипе пĕрле яшкана ямалăх ӳссе çитет, хĕлле валли ăна морозильника хурсан лайăх.

Халĕ укроп, сухан, çарăк, дайкон акма пулать. Вĕсем сивĕсемччĕнех ларĕç, тутлăрах та пулĕç. Пекин купăсти те иккĕмĕш хутчен пулса çитет, паллах, йăлтах çанталăкран килет.

Кирек епле вăрра та сайрарах тата хĕвел лайăх ӳкекен вырăна лартма тăрăшмалла, ун пек чухне çимĕç лайăхрах ӳсет. Çулçăлăх сухан аванах пулса çитет. Укроп хăвăрт ӳсекен сорт пулсан лайăх. Кинзан вара часах вăрă туни тухса кайма пултарать. Пăшăрханма кирлĕ мар, унăн вăрри те апат-çимĕç хатĕрлеме питĕ лайăх. «18 дней», «софит», «родос» сортлă редис тухăçпа савăнтарĕ.

# Сарри е хури?

Хурлăхан пиçсе çитрĕ ĕнтĕ. Хура тĕсли маларах пулать, ăна татма ĕлкĕртĕмĕр, унсăрăн вăл тăкăнма та пуçлать.

Хăшĕ пахарах тата усăллăрах-ши? Тухтăрсем каланă тăрăх, хуринче клетчаткăпа пектин, антиоксидант, С, Е витаминсем, полифенол тата усăллă ытти япала пур.

**Здоровое-питание.рф портал экспер-чĕсем** палăртнă тăрăх, хура хурлăхан сулçи те çырли пекех усăллă. Вăл организма тасатма пулăшать, ӳт температурине чакарать, ăна ĕçсен шăк ытларах тухать. Унран хатĕрленĕ чей организма витаминпа пуянлатать тата çирĕплетет, вăй-хăват парать.

Хĕрлĕ тата сарă хурлăхан та усăллă, тутлă. Хурипе танлаштарсан, вĕсенче антиоксидант сахалтарах. Вĕсенче вара В ушкăнри витамин, фитостерол ытларах. Хĕрли А витаминпа пуян. Шурă тĕсли гипоаллергенлă, ăна татса пуçтарнă чухне ытла çемçелсе каймасть. Ку сорт хĕрлĕ хурлăханран пулнă.

Хурлăхан çырлине туяннă чухне тимлĕ пулмалла, кăвакарнă вырăнсем çуккине лайăх пăхмалла. Çырлана ăшă çĕре лартсан вăл йӳçме пуçлать, çавăнпа та ăна сивĕ вырăн кирлĕ. Çиес умĕн хурлăхана дуршлаг çинче юхакан шывпа çумалла та алшăллипе типĕтмелле. Морозильникра вара вăл чылай вăхăт упранать.

Апат хутаççин, вун икĕ пумăклă пыршăн язва чирĕ пур çынсен ăна кăшт кăна çимелле, юн çăра пулсан, тромбофлебит чирĕпе аптăракансен унпа ытла килеммелле мар.

Çитĕнӳ

# Муркашсем маттур

Иртнĕ шăматкун Тăвай муниципалитет округĕнче «Аль» ФСК стадионĕнче тата 45-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн тренировка базинче пушарпа çăлав спорчĕ енĕпе Раççей МЧС Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн сотрудникĕсем хушшинче çулленхи чемпионат иртнĕ. Унта Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн команди те хутшăннă.

Çулăмпа тытăçăва кĕрекенсем чăрмавсен 100 метр дистанцине парăнтарассипе, пушар пусмипе 4-мĕш хута улăхассипе тата пушар сӳнтерме хатĕрленессипе ăмăртнă.

Республика округĕсенчи 12 команда хушшинче Муркашри пушар чаçĕн команди пĕрремĕш вырăн тата чемпионат кубокне çĕнсе илнĕ. Хыççăнхи призлă вырăнсене Тăвайри тата Шăмăршăри пушарнăйсем çĕнсе илнĕ. Призерсем çавăн пекех медальсемпе грамотăсене тивĕçнĕ.




## Объявления

**Организация закупает скот по высоким ценам: коров, бычков, телят и вынужденный забой. Дорого! Вася. Тел. 8-937-015-00-09. 14-21.**

* * *

**Дорого! Куплю быков, коров, телок. Вынужденный забой по высоким ценам. Тел. 8-903-357-72-79. Володя. 2-10.**

* * *

**КУПЛЮ коров, бычков, телок от месяца на откорм. Дорого. Тел. 8-937-391-23-33. 7-10.**

* * *

**КУПЛЮ бычков от 20 дней до 700 кг, коров, телок. Дорого. Вынужденный забой. Федя. Тел. 8-937-952-33-80. 7-10.**

* * *

**Вăкăр, тына, ĕне хаклă хакпа туянатăп. Тел. 8-937-957-91-51. 7-10.**

* * *

**КУПЛЮ коров, телок. Дорого. Тел. 8-900-330-19-86. 7-10.**

* * *

**КУПЛЮ ДОРОГО! Бычков, коров, телок, овец, лошадей и вынужденный забой. Выдаем документы на получение страховых выплат. Тел. 8-961-344-03-82. Андрей. 2-10.**

* * *

**Закупаю коров, бычков, телок, овец, баранов, коз, козлят. Тел. 8-987-663-42-00. 5-15.**

* * *

**Закупаем овец, коз на мясо. Тел. 8-967-473-68-00. 10-10.**

* * *

**Куплю овец, овец с ягнятами, козлят. Тел. 8-960-313-78-01. 3-3.**

* * *

**Купим овец, овец с ягнятами, коз, коз с козлятами. Тел. 8-927-864-89-00. 2-10.**

* * *

**Куплю бычков, коров, телок и вынужденный забой. Олег. Тел. 8-937-016-00-57. 10-23.**

* * *

**Куплю коз, овец, бычков, коров. Тел. 8-927-850-85-64. 3-12.**

* * *

**Принимаю: газеты, тетради, журналы, картон, пластиковые бутылки любого объема и цвета. Банки ж/б. Полиэтиленовые пленки, поддоны деревянные, овечью шерсть. Приемный пункт в с. Моргауши. Тел. 8-903-065-20-02. Юрий. 9-9.**

* * *

**КУПЛЮ ЛОМ ЧЕРНЫХ И ЦВЕТНЫХ МЕТАЛЛОВ, ПЛАТЫ, РЭЛ, ТЕХНИЧЕСКОЕ СЕРЕБРО, действует спец. цена. ДОРОГО. САМОВЫВОЗ. АВТОВЕСЫ. Тел. 8-961-345-29-63. 3-10.**

* * *

**КУПЛЮ ЛОМ ЧЕРНЫХ И ЦВЕТНЫХ МЕТАЛЛОВ, Б/У АКБ. САМОВЫВОЗ, АВТОВЕСЫ. ДОРОГО. С. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел. 8-908-300-78-79, 8-952-024-19-63. 9-10.**

* * *

**ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ТУЯНАТПĂР. Выдаем документы на получение страховых выплат, в том числе и на вынужденный забой. Тел. 8-905-341-69-25. 10-10.**

* * *

**Купим чувашские наряды из монет (монеты с отверстиями, мелочь СССР) домоткань (пир, платья, вышивки), иконы, самовары и тд., пух-перо (подушки, перины), рога, металл, радиолом (платы, радиодетали), телевизоры, видеомагнитофоны, ДВД, компьютеры, муз. центры, телефоны (сотовые, домашние), аппаратуру: проигрыватели, магнитофоны (кассетные, катушечные и тд), усилители, колонки, радиолы, приемники, фотоаппараты любые, часы любые, шв. машинки, пластинки, кассеты, книги, открытки СССР, значки, бутыли, пивные кружки, прялки, лапти, коромысла, мебель, сундуки, сапоги, форма, гармони/баяны и не только. Тел. 89278520181 (skupka-21.ru) 9-30.**

* * *

**Дорого. Куплю бычков от 10 дней и старше. Тел. 8-917-655-58-52. 1-10.**

* * *

**Куплю: бычков с 1 месяца до 1,5 года на откорм; телок; коров. Дорого! Тел. 8-987-739-40-25. 1-3.**

* * *

**Закупаем пух-перо свежее и б/у, принимаем: подушки, перины, пух в сухом и мокром состоянии. Самовывоз, дорого, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел. 8-908-300-78-79. Василий. 9-10.**

* * *

**Требуются рабочие на уборку картофеля в Лысковский район Нижегородской обл. Жилье предоставляется. Тел. 8-904-920-27-70. 2-2.**

* * *

**В связи с расширением производства на ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» требуются: главный бухгалтер – 74500 руб/мес, главный ветеринарный врач – 74500 руб/мес, начальник автотракторного парка – 54000 руб/мес, ветеринарный врач – 43500 руб/мес, санитар-ветеринарный – 40000 руб/мес, операторы ПТФ – 40000 руб/мес, птицеводы – 40000 руб/мес, грузчики – 40000 руб/мес, приемщики яиц – 40000 руб/мес, подсобные рабочие – 40000 руб/мес, рабочие-строители – 40000 руб/мес, трактористы – 40000 руб/мес, электромонтеры – 40000 руб/мес, слесари-ремонтники – 40000 руб/мес. Достойная заработная плата. Полный соцпакет, служебный транспорт из с. Моргауши. Обращаться в отдел кадров по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Кораккасы, ул. Новая, д. 66. Тел. 8-952-313-17-28, 8(83541) 65-2-49, info@ptf21.ru 4-4.**

* * *

**В швейный цех с. Моргауши требуется швея, трудоустройство по ТК. Зарплата сдельная, оплата каждые две недели. Тел. 8-987-667-31-06. 1-5.**

* * *

**Ноябрьте 6-мĕш пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел. 8-951-997-47-48.**

* * *

**В связи с открытием новой фермы в д. Шептаки Моргаушского округа АО «Агрофирма» «Куснар» приглашает на работу работников на ферму с достойной з/платой (выплата 2 раза в месяц), доставкой до места работы и обратно, полный соцпакет. Тел. 8-960-307-05-42. 1-2.**

* * *

**Предписание**

**с. Ильинка**
**(место составления) «25» июля 2023 г.**

**Территориальным отделом Ильинский Управления по благоустройству и развитию территорий администрации Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики на основании решения Моргаушского районного суда Чувашской Республики от «21» октября 2022 г. дело № 2а-588/2022 установлено, что ветхое строение с координатами: 56.182134/46.834221 и некапитальные объекты: металлические конструкции (шкафы, боксы) в количестве 17 штук с координатами:**

| | | |
|---|---|---|
| 56.180822/46.834944; | 56.183229/46.832175; | 56.183522/46.832133; |
| 56.183543/46.832135; | 56.183877/46.831933; | 56.184283/46.831755; |
| 56.184296/46.83176; | 56.184335/46.831709; | 56.184513/46.831546; |
| 56.184875/46.83123; | 56.184889/46.83119; | 56.185466/46.830861; |
| 56.186027/46.83058; | 56.186032/46.830548; | 56.186094/46.830502; |
| 56.186095/46.830462; | 56.186399/46.830541 | |

**расположенные по адресу: береговая полоса в районе ул. Курортная с. Ильинка Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики .**
**(адресные ориентиры местоположения относительно ближайшего строения(ий)),**

**незаконно установлены и используются на земельном участке, не отведенном (предоставленном) для этих целей в установленном порядке:**
**- на земельном участке, находящемся на территории Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики, государственная собственность на который не разграничена.**
**В соответствии с п. 2 ст. 76 Земельного кодекса РФ владельцам необходимо освободить незаконно занятый земельный участок и демонтировать вышеуказанные объекты в срок до « 15 » августа 2023 г.**
**После демонтажа незаконно размещенных объектов провести работы по благоустройству освобожденной территории.**
**В случае невыполнения данного предписания будет осуществлен принудительный демонтаж и эвакуация незаконно размещенных некапитальных объектов в место временного хранения с последующим взысканием произведенных расходов с владельцев демонтированных незаконно размещенных некапитальных объектов.**

**Контактный телефон: (8 83541) 66 8 04.**

**СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ**
*4 августа, Моргауши с 13:00 до 14:00*
*РДК (площ. Красная, 5.)*
**При покупке сл. аппарата - проверка слуха БЕСПЛАТНО!**
*При покупке сл. аппарата - СКИДКА 25%*
Выезд специалиста на дом | Рассрочка без участия банка | Батарейки 300 руб. При покупке аппарата - батарейки в подарок! | Компьютерная настройка
**ИП "Васильев М. Ю." Т.89501643803** (Реклама)
*Рассрочку предоставляет ИП "Васильев Михаил Юрьевич" ИНН 181702168338 ОГРН 321183200042231
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ. НЕОБХОДИМА КОНСУЛЬТАЦИЯ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

## Прогноз погоды

По данным сайта Gismeteo

| | Пт 28 | Сб 29 | Вс 30 | Пн 31 | Вт 1 авг | Ср 2 | Чт 3 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Облачность | | | | | | | |
| Температура (день/ночь) | +34 / +19 | +33 / +21 | +26 / +20 | +24 / +17 | +26 / +17 | +26 / +18 | +27 / +19 |
| Ветер (скорость/направление) | 8 ЮЗ | 12 Ю | 10 ЮЗ | 8 З | 5 З | 6 С | 5 СЗ |
| Давление мм/рт.с. (день/ночь) | 743 / 740 | 741 / 740 | 741 / 739 | 742 / 740 | 744 / 742 | 744 / 743 | 746 / 743 |
| Влажность, % | 54 | 53 | 72 | 79 | 78 | 75 | 65 |

## Объявления

**Августăн 19-мĕшĕнче пĕрремĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел. 8-927-858-03-84.**

* * *

**Август уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел. 8-937-396-92-66.**

* * *

**В Моргаушский кирпичный завод требуются загрузчики-выгрузчики; садчики-футеровщики, техник-лаборант, водитель категории С, Е. З/п от 35000 руб. Телефон для справок: 8(83541)62-3-47. Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Восточная, д. 1. 1-2.**

* * *

**На производственное предприятие в с. Моргауши требуются: рабочие, з/п от 30000 руб., маляр, з/п от 35000 руб. График работы 5/2 с 8.00 до 17.00. Возраст с 18 до 50 лет. Обращаться по номеру: 8-952-024-17-11. 1-2.**

* * *

**Продаю домашних поросят 1,5 – 2 месячных. Цена от 3000 руб. Тел. 8-960-311-22-86. 1-5.**

* * *

**ЗАПЧАСТИ НА ИНОМАРКИ В НАЛИЧИИ И НА ЗАКАЗ В МАГАЗИНЕ «АВТОМИГ». Тел. 8-906-387-47-77. 1-10.**

* * *

**10 уйăхри хура-шурă тĕслĕ тына пăру усрама сутатпăр. Тел. 8-961-345-30-78.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования является размер и местоположение границы выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является:

Администрация Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики, расположенная по адресу: Россия, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина дом 6.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес (местоположение): Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел. 63-4-39, E-mail:arshin21@yandex.ru

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, дом 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу:

1) 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина дом 41/5(ООО Аршин).

2) Управление Росреестра по Чувашской Республике по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом 56.

**4 АВГУСТА (ПЯТНИЦА)**
**С 9:00 – 13:00 СОСТОИТСЯ ВЫСТАВКА-ПРОДАЖА МЕДА ИЗ БАШКИРИИ.**
**АКЦИЯ: 3-ХЛИТРОВАЯ БАНКА ЦВЕТОЧНОГО МЕДА 1200 РУБЛЕЙ.**
**РЫНОК МОРГАУШСКИЙ.**

### ТАВ ТĂВАТПĂР

Пирĕн çывăх çыннăмăра, Муркаш ялĕнче пурăннă Геннадий Александрович Ермакова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пур тăван-хурăнташа, юлташсене, кӳршĕсене, мĕнпур ял-йыша, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн председательне В. Семенова чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Эсир ырă туни сире каялла ырăпа таврăнтăр. Пурне те таса сывлăх сунатпăр.

**Ермаковсен çемйи.**

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем хуçалăхра нумай çул ĕçленĕ

**Геннадий Александрович**
**ЕРМАКОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерееççĕ.

Отдел образования администрации Моргаушского муниципального округа и руководители общеобразовательных организаций выражают глубокое соболезнование Димитриевой А.Ф., ведущему специалисту отдела, в связи с тяжелой утратой отца

**Фадея Серафимовича**
**СЕРАФИМОВА.**

**ЕСТЬ РАБОТА!**
**ООО «СМУ-127»**

**водители:**
- на бензовоз (от 50 000 руб.)
- на самосвал (от 50 000 руб.)
- на миксер (от 70 000 руб.)
- автовышки Газ (от 50 000 руб.)
-погрузчика bobcat (45 000 руб.)
- на длинномер (от 50 000 руб.)

**машинисты:**
- на автокран (от 60 000 руб.)
- на кран-манипулятор (от 60 000 руб.)
- на бульдозер (от 60 000 руб.)
- на погрузчик (трактор МТЗ-82) (45 000 руб.)
- на башенный кран (от 70 000 руб.)

**Мы предлагаем:**

Достойную оплату труда.
Официальное трудоустройство.
Работу в пределах Чувашской Республики.
Корпоративный социальный пакет (подарки к праздникам и др.).

**СВЯЖИТЕСЬ С НАМИ СЕГОДНЯ**
**8-919-138-24-00**

